24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АПРЕЛЬ
26
ШАМАТКУН
98 (5813) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрле шăр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Кадрсене экономикăллă образовани парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле

ВКП(б) Пĕтĕм Созри XVIII конференцийĕ пирĕн тăван çĕршывăн пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан решенисем йышăнчĕ. Конференци парти организацийĕсене промышленноçпа транспорт еннелле çавăрма, малашне ĕнтĕ промышленность тĕлĕшпе те, ялхуçалăх тĕлĕшпе те пĕртанах ĕçлесе пыма хушрĕ. Партин XVIII конференцийĕ çак питех те палăк задачăна кăларса тăратрĕ: «Хозяйственниксен тата парти ĕçĕнчи руководительсен çакăн пек ĕçлес пулать: 1941 çулта пĕр обласра та, пĕр хулара та тата промышленноçлă пĕр центрта та кая юлса пыракан пĕр предприяти те ан юлтăр. Пирĕн промышленноçра тата транспортра юлса пыракан предприятисем пулмалла мар. Мĕнпур заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, чугунçулсем плана тултарса пыма тивĕçлĕ» (ВКП(б) XVIII конференцийĕ Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцирен).

Продукци туса кăларас плана, конференци хушнă тăрăх, вăтамран илсе кăна мар, малтанах хатĕрленĕ график тăрăх, пĕртан тултарса пымалла. Плана кашни уйрăм предприяти, кашни кун, кашни цех, кашни бригада, кашни станок, кашни смена тултарса пыни кирлĕ. Продукци комплектлă тата кăтартса панă ассортимент тăрăх туса кăлармалла. Продукци туса кăларма хăйне ларакан хака йăнетсех пырас пулать. Пур предприятисенче те хуçăрлăха пĕтермелле, хозрасчета пурнăçа кĕртсе пымалла.

Халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма вырăнсенчи парторганизацисен руководителĕсем тата хозяйственниксем предприятисене вĕсен экономикине тĕплĕн пĕлсе ертсе пыни кирлĕ. Вĕсен марксизм-ленинизм теорийĕн никĕсĕсене тата техникăна вĕренсе пынă пекех, экономика науки не те тĕплĕн вĕренмелле.

Предприятисен экономикине тĕплĕн пĕлсе тăни кирли çинчен Сталин юлташ нумай хут тата татăклăн кăтартса панă. Вăл ку ыйту тăрăх, çăмахран, çапла калать: «...заводăн, фабрикăн, шахтăн техникине, экономикине, финансне вĕренсе алла илмесессĕн—унсăрăн ăнăçлă ĕç пулмасть, единоначали пулмасть» («Вопросы ленинизма», изд. 10-е, стр 444).

Молотов юлташ та партин XVIII съездĕнчех хозяйственниксем производство экономики çине тимлĕн пăхни кирли çине кăтартса пачĕ. «Экономика çине, туса кăларакан продуктсен хакĕ çине тимлĕн пăхассине ĕçре пурнăçласа пымалла. Кашни предприятин, кашни организацин ĕçĕ государствăна мĕн чухле ларнине лайăх пĕлсе тăмалла. Çав вăхăтрах баланса уçса пăхассине, отчетноçа вĕренессине, хозрасчет принци тăрăшассине хăйсен тивĕçĕнчен те кая хуракан хуçалăх руководителĕсем пирĕн халĕ те тупăнаççĕ-ха. Çавăн пек юлхавлăха, экономикăна пĕлменнине, государствăна тата большевизма хирĕçле практика вырăнне хурса, пĕтерес пулать» (Молотов).

Партин XVIII конференцийĕ кăларса тăратнă задачăсем парти ĕçĕнчи тата хуçалăх ĕçĕнчи кадрсен экономикăллă образованине ӳстерсех пыма кирли çинчен тата тепĕр хут астутарса каласçĕ. Вĕсен, пирĕн кадрсен, промышленноçпа транспорта ăнăçлăн ертсе пыма, экономика теорине тăрăшса вĕренсе пымалла.

Мĕнле майпа ӳстерсе пымалла-ха кадрсен экономикăллă образованине? Кадрсем экономика теорине вĕренмелли тĕп май, паллах ĕнтĕ, вĕсем хăпăрхăй тĕллĕн литература вуласа вĕренесси пулать. Практикăллă пысăк ĕçсене туса пынă вăхăтрах пирĕн кадрсен хăйсен теориллĕ пĕлĕвĕсене ӳстерсе пыма та вăхăт тата вăй-хăват тупмалла.

Çав вăхăтрах парти комитечĕсен те парти ĕçĕнчи тата хуçалăх ĕçĕнчи кадрсене хăйсен экономикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерме пулăшмалла. Лекцисем тата семинарсем ирттересси—кадрсене экономикăллă образованине ӳстерме пулăшмалли ытларах сарăлнă май пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе ĕнтĕ пирĕн Чăваш парторганизацинче те хăшпĕр опытсем пур.

Акă, çăмахран, чугунçулăн Канаш узелĕнчи партком хуçалăх ĕçĕнчи активăн семинарне ирттернĕ. Çак семинарта Совет Союзĕн экономикăллă тĕп задачи çинчен, транспорт экономикипе планировани çинчен тата предприяти балансĕпе учет çинчен лекцисем итленĕ. Лекцисене итлеме 40 çынран сахал мар пынă.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ парти ĕçĕнчи тата хуçалăх ĕçĕнчи хулари актива валли организациленĕ семинарта та, тĕпрен илсен, ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ. Семинарта ку тарана çитсе пилĕк заняти пулса иртнĕ. Занятисене квалификациллĕ преподавательсем ирттереççĕ. ВКП(б) хула комитечĕ семинара 30 çын çӳремелле тесе çирĕплетнĕ пулсан, занятисенче предприяти директорĕсем, цех начальникĕсем, бригадирсем, мастерсем, промысла артелĕсен руководителĕсем, промышленность предприятисенчи тата транспорт çинчи парторганизацисен секретарĕсем — пурĕ 33—50 çын таран пулаççĕ. Нумай юлташсем, çăмахран, Пономарев («Красный мебельщик» артельрен), Писарева (Ленин ячĕпе тăракан артельрен), Овчинников (Промсоюзран), Блау (автотранспорт работникĕ) т. ыт. те занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

Анчах, нумай юлташсем хăйсен экономикăллă образованине ӳстерсе пыма тăрăшнă вăхăтрах, хăшпĕр юлташсем вĕренмесĕрех мĕнле те пулин ĕçлĕпĕрха, тесе шутласçĕ пулас. Çапла Шупашкарта Старшовпа Александров юлташсем (иккĕшĕ те кирпĕч заводĕнчен), Герасимов юлташ (эрех-ликер заводĕнчен) семинара пĕр хут та пырса курман-ха. Кун пек юлташсем хăйсен экономикăллă образованине ӳстерме тăрăшманнипе хăйсенех пысăк чăрмав кӳни курăнсах тăрать.

Ертсе пырас ĕçри кадрсен экономикăллă образованине ӳстерме пулăшас тĕллĕпе районри парторганизацисенче те чылайăшĕнче пирвайхи утăмсене тунă. Анчах пирвайхи утăмсене кăна тунă-ха! Ку ĕçе малашне те тимлĕн туса пымалла. Хальхи вăхăтра пуçламĕш парторганизацисенче пулса иртекен отчетра сӳлав пухăвĕсенче кадрсен экономикăллă образованине ӳстерес ыйту çине тĕплĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, Шупашкар хулинче республикăри тата хулари актива хăйĕн экономикăллă образованине ӳстерме пулăшма квалификациллĕ лекцион циклне ирттереççĕ. Çавăн пекех Улатăрти паровозсем юсакан заводра, Канашри вагонсем юсакан заводра тата Çĕмĕрлепе Куславкка комбиначĕсенче производство командирĕсене валли предприяти экономикине вĕренмелли семинарсем пулаççĕ. Партин Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Вăрмар, Вăрнар, Çĕрпӳ, Куславкка тата Пĕреç райкомĕсем çумĕнче вырăнти промышленноçпа транспортри актива валли предприятисен экономикине вĕренмелли семинарсем ирттермелле тунă. Парткабинетсенче пуринче те политэкономи тăрăх тата конкретлă экономика ыйтăвĕсем тăрăх консультацисем организацилемелле (консультацисем уйрăмăн та, группăллă та пулмалла).

Партипе хуçалăх ĕçĕнчи активăн экономикăллă образованине ӳстерме пулăртнă мероприятисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, паллах ĕнтĕ, лекторсене, докладчиксене, заняти руководителĕсене, консультантсене тупса уйăрасси, вĕсене хăйсен ĕçне тума хатĕрленме пулăшасси тата ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслесси çине тĕплĕн çавăрăнса пăхас пулать. Ку ĕçе тума чăннипех пултаракан, экономикăллă образовани пысăк юлташсене уйăрас пулать,—çак условие асрах тытсассăн тин ĕç ăнăçлă пулма пултарать.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ кăларса тăратнă задачăсем парторганизацисене кадрсен экономикăллă образованине ӳстересси çине тимлĕн пăхма, партработниксемпе хозяйственниксене предприятисен экономикине тарăннăн тĕпчесе вĕренме хушаççĕ. Парти комитечĕсемпе вĕсен ертсе пыракан работникĕсен çак участока та ĕçе ертсе пырассине хăйсен аллине илес пулать.

Кадрсен экономикăллă образованине ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесе пымалла.

Литва ССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕ
Сталин юлташ патне янă салам

Ĕççыннисен çулпуçне, наукăн аслă тусне
Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

Наукăллă творчествăшăн тата нацилĕ культурăсене аталантарса вăйлатассишĕн Эсир аслă вăй хурса тăрăшнине асра тытса, Литва ССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пĕрремĕш пухăвĕ, Литва СС Республикинчи историллĕ çак событине май, Сире, Иосиф Виссарионович, пĕтĕм чĕререн саламлать. Эпир савăнатпăр, советлă çĕнĕ республикăра Наукăсен Академине туса хунипе Литвари ученăйсен тахçантанпах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ.

Пуху участникĕсем пурте çакăн çинчен чаплăн калаççĕ: вĕсем Литва СС Республикинчи наукăпа ĕççыннисен ырлăхĕшĕн ĕçлеме хатĕр тăраççĕ кăна мар, тата Совет Союзĕнчи Наукăсен ытти Академийĕсемпе пĕтĕм чĕререн туслăн çыхăнса ĕçлеме, социализмлă стройăн научнăй никĕсĕсене çирĕплетсе пыма хатĕр тăраççĕ.

Пуху председателĕ
профессор М. БИРЖИШКА.
Пуху секретарĕ
профессор П. СКАРДЖУС.

Каунас, апрелĕн 23-мĕш.

Украинăри ертсе пыракан парторганăсен суйлавĕсем

КИЕВ, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). Украинăра партин ертсе пыракан органĕсен суйлавĕсем организованно, большевикла критикăпа самокритика никĕсĕ çинче иртсе пыраççĕ. Докладчисем тата пренисенче тухса калакансем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене практикăра пурнăçа кĕртесси çинчен нумай калаççĕ.

КП(б)У Центральный Комитечĕ пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 21-мĕш тĕлне Украинăри пуçламĕш парторганизацисенче 5.270 организацире отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ.

Коммунистсем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен нумай ӳснине çакă кăтартса парать: парторганизацисен секретарĕсемпе парторгсен отчетлă доклачĕсене активлăн сӳтсе-явраççĕ. Пренисенче 43.256 çын — пухусенче пулнисен 49,2 процентĕ тухса каланă. Партбюросемпе парторгсен ĕçне хаклаççĕ. 535 пуçламĕш парторганизацин ĕçне çитлĕксĕр тесе йышăннă.

Коммунистсем руководствăна нумай çамрăк юлташсене — хăйсен пултарулăхне практикăллă ĕçре кăтартса панă юлташсене суйланă. 2.017 çынна бюросемпе пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем пулма пирвайхи хут суйланă.

„Ленинпа Сталин парти строительстви çинчен" ятлă сборник

Сывăх вăхăтра Госполитиздат «Ленинпа Сталин парти строительстви çинчен» ятлă сборникăн пĕрремĕш томне пичетлесе кăларать. Сборник икĕ томлă пулать. Ана пичете пама ЦК ВКП(б) çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕ хатĕрленĕ.

Сборнике парти строительствин ыйтăвĕсем çинчен Ленинпа Сталин çырнă чи паха произведенисене тата парти съезчĕсемпе конференцийĕсем, ЦК ВКП(б) пленумĕсем йышăннă решенисене кĕртнĕ. Сборник большевизм историйĕн мĕнпур тапхăрĕсенчи партстроительство ыйтăвĕсене вĕренес ĕçре парти кадрĕсене пысăк пулăшу парать.

Сборникре Ленинпа Сталинăн произведенийĕсенĕ пĕр кĕскетмесĕр пичетлесе кăлараççĕ, хăшпĕр произведенисенчен кăна организацияллĕ ыйтусем çинчен калакан уйрăм сыпăксене е раздолсене илнĕ. Сборник умсăмахĕ вырăнне Сталин юлташăн произведенийĕсем пичетленессĕ, вĕсем парти çинчен калакан марксистле-ленинла вĕрентĕве пĕтĕмĕшле характеристика параççĕ.

Сборникăн пĕрремĕш томĕнче парти историйĕн Октябрьченчи тапхăрĕпе сыхăнса тăракан производенисемпе документсем пулаççĕ, иккĕмĕш томра — Октябрь хыççăнхи тапхăрпа сыхăнса тăраканнисем.

(ТАСС).

Шахматистсен матч-турнирĕ

Апрелĕн 21-мĕшĕнче 16-мĕш турта Ботвинникпа Керес партийĕ тĕп вырăнта пулнă. Çак партине выляса илнĕ пулсан, Кересăн пĕрремĕш вырăна тухма шанчăк пулнă пулĕччĕ тата, кунсăр пуçне, ун чухне вăл хăйпе Ботвинник хушшинчи матча ничьăпа вĕçленĕ пулĕччĕ. 20-мĕш ходра Ботвинник ничья тума сĕннĕ, Керес вăл сĕнĕве йышăннă. Çапла ĕнтĕ, матча Ботвинник Керестан 2,5:1,5 шутпа выляса илнĕ.

Лилиенталь Болеславскине выляса янă. Смысловпа Бондаревский партийĕ вылянса пĕтмен. Çак партире Бондаревскин выляса илме шанчăк пур.

18 тур вылянă хыççăн малта Ботвинник пырать—16 партирен 10 очко выляса илнĕ. Ун хыçĕнче Керес—16 партирен 8 очко илнĕ, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсенче Бондаревскипе Болеславский тăраççĕ—15 партирен 7,5-шар очко илнĕ, пиллĕкмĕшпе улттăмĕш вырăнсенче Лилиентальпа Смыслов—16 партирен 7-шер очко илнĕ.

(ТАСС).

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Уйăхри плана срокчен тултаратпăр

КУСЛАВККА, апрелĕн 25-мĕш. (Телефон тăрăх). Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту кунсерен вăйланса пырать. Хăма çуракан цех коллективĕ пуринчен малта пырать. Вăл хăма çурса кăларас тĕлĕшпе апрель уйăхĕнчи плана пĕтĕмпех тултарчĕ.

Ытти цехсем те талăклăх çирĕм график тăрăх ĕçлесе пыраççĕ. Пĕтĕм комбиначĕпе илсен, талăклăх график кашни кунах 103 процентран кая мар пурнăçланса пырать. Уйăхри плана срокчен, икĕ кун малтан тултаратпăр.

Ф. АРТЕМЬЕВ.
Куславкка комбиначĕн директорĕ.

Кондитерски цех малта пырать

ÇĔРПУ, апрелĕн 25-мĕш. (Телефон тăрăх). Пищекомбинат коллективĕ пĕрремĕш кварталта тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, иккĕмĕш кварталта та ăнăçлăн ĕçлесе пырать.

Халĕ пищекомбинатра Май уявне çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн цехсем тата уйрăм рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Сăмахран, кондитерски цех çирĕм кунхи плана 102 процент тултарчĕ.

Комбинат коллективĕ пĕрремĕш кварталти плана 121 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕш кварталти плана татах та ытларах тултарассишĕн кĕрешет.

Т. МАЙОРОВ.

Промартельсенче

ÇĔРПУ. Районри промартельсем Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва сарса пырса хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Производствăллă плана иртерсе тултараççĕ. Абакассинчи артель пĕрремĕш кварталти плана 129 процент, Туçири артель—122 процент, Хорнзорти артель—113 процент тултарнă.

Хальхи вăхăтра артельсем татах та пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

К. ЛЬВОВ.

Колхоз çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслерĕç

ÇĔМĔРЛЕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра «Ленин çулĕпе» стена хаçачĕ тухса тăрать. Стена хаçатĕнче колхоз пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çутатса пыратпăр. Çак кунсенче эпир колхоз çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухрăмăр.

Пĕтĕмĕшле илсен, пирĕн колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ темелле. Вăрлăхсене тасатса хунă. Ялхуçалăх машинисене юсаса хатĕрленĕ. Çураки вăхăтĕнче колхозра ултă сеялка ĕçлемелле. Çуртрисене пĕтĕмпех машинăпа акаççĕ. Сеялкăсемпе ĕçлеме пултарулăх колхозниксене çирĕплетнĕ. Сеялщиксем: С. Тихонов, М. Мигушов, И. Михайлов, П. Матвеев, Е. Мигушов, В. Романов юлташсем тăваттăмĕш çул ĕнтĕ çав ĕçре ĕçлеççĕ.

Çураки вăхăтĕнче ĕçлеме МТ Станципе договор тунă. Халь тракторсем нурте вырăнта юсавлă лараççĕ. Колхоз правленийĕ тракторсем валли горючи, вăрлăхсем турттарма уйрăм колхозниксене çирĕплетнĕ.

Колхозăн план тăрăх сĕлĕ 286 центнер, тулă — 66 центнер, çĕрулми —160 центнер яровизацилесе акмалла. Плана пурнăçлама тытăннă. Çĕрулми вăрлăхне 88 центнер яровизацилеме хунă. Тулă вăрлăхне 40 центнер типĕ майпа протравить тунă.

Уйра ĕçлекен колхозниксем валли столовăй организацилеççĕ. Столовăй валли продуктсем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Апат пĕçерекенсене те уйăрнă.

Колхозăн çуракине хатĕрленес çĕрте çитменлĕхсем те пур-ха.

Лашасене пăхас ĕçе те тивĕçлипех организацилемен. Хăшпĕр бригадăсенче лашасем начар. Ф. Кудаков конюх уйрăмах япăх ĕçлет. Вăл пăхакан лашасене юрăхсăр сӳменсем тăхăнтарса суранлатнă тата пĕр кĕсре хăм пăрахнă.

Çак çитменлĕхсем çуракине вăхăтра тухма чăрмав кӳреççĕ. Колхоз правленийĕн çав çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле. Çуракине тухма пур енчен те хатĕр пулмалла.

С. БАТЬКОВ.
«Ленин çулĕпе» стена хаçат редакторĕ.

Çураки умĕн

ÇĔРПУ. Тутарла Канаш ялсоветĕнчи парти кандидачĕсен группин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура комсомолецсем те пулчĕç. Пуху ялсовета кĕрекен колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен сӳтсе-яврĕ, хăшпĕр колхозсем çуракине япăх хатĕрленнине палăртрĕ.

«Сталинцы» тата «Красный флот» колхозсенче сеялкăсене майлаштарса çитермен. «Красный флот» колхоз чугунçул станципе юнашар пулсан та минерал удобренисем кӳрсе килмен, уя тислĕк кăлармалли плана тултарман. Акмалли вăрлăхсем кондицине лармаççĕ.

Парти кандидачĕсен группин пухăвĕ çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме, çуракине тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илме пулчĕ.

А. МИХЕЕВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Пăр çинчи çĕнĕ лагерьте иккĕмĕш талăк

«СССР Н-169» самолетăн радиостанцийĕпе Арктикăн хĕвелтухăç секторĕнчи полярти радиостанцисем хушшинче пĕрмаях çыхăну тытса тăраççĕ.

Научно-исследовательски ĕçсене татти-сыпписĕр туса пыраççĕ. Летчик Черевичный тăватă моторлă сывлăш карапне питех те лайăх антарса лартнă пăр тĕроклĕ те çирĕп. Уяр çанталăк тăрать. Ыран апрелĕн 24-мĕш тенĕ чух çĕрле лагерьте 18 градус сивĕ пулнă. «Экспедици участникĕсем хăйсене, çĕр çинчи пекех, лайăх туяççĕ»,—тесе пĕлтерет Макаров юлташ радио тăрăх.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче çакă палăрнă: пăр кăнтăр еннелле хуллен юхса пырать. Лагерь координачĕсем: çурçĕр широтин 79 градусĕпе 54 минути, хĕвеланăç долготин 169 градусĕпе 48 минути. Сывлăш температури—20 градус сивĕ.

Инçетри широтасем çинчи экспедици участникĕсем виççĕмĕш номерлĕ пăр çинче 4—5 кун ирттерме шутлаççĕ.

(ТАСС).

Советлă Литва, Латви тата Эстони экспоначĕсем

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче Литва тата Латви СС Республикисенчен натурăллă экспонатсен пĕрремĕш партийĕ килсе çитнĕ. Экспонатсем хушшинче — тăштырă культурисен темиçе сорчĕ, йĕтĕн вăррисен образцĕсем, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕн изделийĕсем.

Прибалтикăри союзлă республикăсен павильонĕ стэндсем валли Революци музейĕнчен интереслă документлă материалсем илнĕ, вĕсем Литвари, Латвири тата Эстонири ĕççыннисен ирттнĕ ăхăтри революцияллĕ ĕçĕсене кăтартса параççĕ. Фото-ӳкерчĕксем Прибалтикăри рабочисемпе хресченсем вырăс пролетариачĕпе пĕрле патша самодержавине хирĕç кĕрешнине кăтартса параççĕ.



Асурети ялĕнчи (Грузин ССР) Берия ячĕпе тăракан колхоз 1940 çулта çĕнĕ мунча туса лартнă. Мунча кабинкисенче ванна тата душ нур, шывĕ — кӳкĕртлĕ шыв çăлкуçĕнчен юхса кĕрет. Ку мунчара пĕр сехет хушшинче 22 çын çăвăнма пултарать. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: колхоз мунчи. В. Черкасов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Аслă шкулсем çумĕнчи экстернат

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Аслă шкул ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ аслă шкулсем çумĕнчи экстернат çинчен калакан положенине çирĕплетнĕ.

Экономически, юридически тата искусствоведчески аслă шкулсем çумĕнче, университетсемпе педагогика аслă шкулĕсем çумĕнче философи, истори, филологи, экономика, юридически, математика тата театроведени ыйтăвĕсем тăрăх экстерн йĕркипе экзаменсем пама ирĕк параççĕ. Экстерн йĕркипе экзаменсем пама вăтам шкултан вĕренсе тухни çитнĕ специальноçа вĕренмелли план тăрăх, экстерн йĕркипе экзаменсем пама ирĕк панăранпа 6 çул хушши иртиччен, мĕнпур зачетсемпе экзаменсене те пăрса пĕтернĕ хыççăн, вĕсене государство экзаменĕсене тăма ирĕк параççĕ. Государство экзаменĕсене пĕтĕмĕшле йĕркесем тăрăх, çав специальность тăрăх çирĕплетнĕ экзамен сессийĕн тапхăрĕнче ирттереççĕ.

Государство экзаменĕсене панă экстерн аслă шкултан вĕренсе тухни çитнĕ диплом илет.

Испытанисем панăлăн çакăн чухлĕ илеççĕ: кашни курс тăрăх панă экзаменăн е зачетăн—10 тенкĕ, государство экзаменне панăлăн—25 тенкĕ.

(ТАСС).

Узбекистан столицине реконструкцилес ĕç

Узбекистан столицин — Ташкент хулин сăн-сăпачĕ çулсерен ытларах та ытларах улшăнса пырать. Кукăр-макăр, ансăр урамсем вырăнне асфальт сарнă тӳрĕ магистральсем туса хунă. Çак урамсенче нумай хутлă, илемлĕ çуртсем ӳссе ларнă.

Строительство кăçалхи çул уйрăмах анлăн сарăлса каять. Ташкентри промышленноçа, хула хуçалăхне тата благоустройствăна вăйлатас ĕçе 66 миллион тенкĕ хураççĕ.

Кăнтăр енчи садсенче

Çĕршывăн кăнтăр енчи районĕсенче улма-çырла йывăççисем вăйлăн чечеке ларни çинчен пĕлтереççĕ. Туркменире, Таджикистанра тата Вăтам Азири ытти республикăсенче сливăнни пек тĕшĕллĕ çимĕç паракан садсем чечек тăкнă та ĕнтĕ. Персиксем, абрикоссем, черешня пысăк тухăçлă пуласса кĕтеççĕ.

Молдаван ССР Республикинче, Одессăпа Николаев облаçĕсенче абрикоссем, чей çырли, черешня чечеке ларнă. Крымра улмуççисем шап-шурă чечекре. Закавказьери цитрус йышши йывăççисен чечекĕсем чăмăртанаççĕ. Грузире вырăн-вырăнпа лимонсемпе мандаринсем чечеке лараççĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка заемĕн подпискине тӳлес ĕç

Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заемăн подписчикĕсем апрель уйăхĕнче юлашки взноссене тӳлеççĕ. Çакă вăл — Совет правительствин кăларнă заемсенчен чи пысăк заем. Ăна çырăннисен пĕтĕм хисепĕ — 60 миллион çынна яхăн. Июнĕн 7—8-мĕшсенче пĕрремĕш тираж пулать. Çак çулта заемăн пурĕ 4 тираж — Петрозаводскра, Льворра, Белостокра тата Тулара пулать

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртеççĕ

СĔНТЕР. ВКП(б) райкомĕ çирĕплетнĕ план тăрăх, апрелĕн 23-мĕш тĕлне районра 22 пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртеççĕ. Муркашри территориллĕ пуçламĕш парторганизацинче кăна пуху палăртнă вăхăтран кая юлса уçăлнă. Ытти организацисенче пуринче те пухусем ЦК ВКП(б) инструкцине çирĕп пăхăнса ĕçлени тăрăх иртнĕ.

Пухусенче коммунистсене, чи малтан çамрăк коммунистсене, воспитани парас ыйтăва çивĕччĕн лартнипе пĕрлех, хуçалăхлă ĕçсене ертсе пырассине лайăхлатасси çинчен нумай калаçĕ. Колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисенче колхозсене организацилепе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес, общественнăллă хуçалăха аталантарса пырас тĕлĕшпе хаклă сĕнӳсем параççĕ.

Пухусенче райком ĕçĕнчи çитменлĕхсене те кăтартса параççĕ. ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш организацисен секретарĕсен заместителĕсене кирлĕ пек ертсе пыманни, вĕсене партиллĕ ĕçе куллен хутшăтманнăн çинчен каларĕç.

Тăвату колхозра пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене рядовой колхозник-стахановецсене суйланă.

Н. ФЕДОРОВ.
ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем малтанхи кунĕсемех коммунистсем парти пурнăçĕнчи çак пысăк событие тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илнине кăтартса пачĕç.

МТ Станцинчи пуçламĕш парторганизаци хуçалăхлă ĕçсене тивĕçлипе ертсе пыман. Çавна пула ăнтă МТС тракторсене халĕ те юсаса çитермен, хăйĕн 1940 çулти ĕçĕсем çинчен колхозсенче отчетсем тума, 1941 çул валли колхозсемпе договор тăвас ĕçе çапах пуçарман. Кунта ĕç дисциплини те çирĕп мар. Хăшпĕр работниксем ĕç вăхăтĕнчех унта-кунта тухса çӳреççĕ.

Çак çитменлĕхсене шута илсе, отчетпа суйлав пухăвĕнче парторганизаци ĕçне коммунистсем хытă критиклерĕç.

Райсовет исполкомĕнчи парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче исполкомра ĕçсыннисен жалобисене пăхса тухас ĕçри çитменлĕхсене уçса палăртрĕç. Кунпа пĕрлех Николаев коммунист йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлма хăтланнине, кирпĕч завочĕн директорĕ Мокеев юлташ ĕçлес вырăнне ахаль сӳпĕлтетсе вăхăта ирттернине хытă критиклерĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсенчен пĕри вăл — парти райкомне сахал критиклени пулать.

Г. САХАЛКИН.
ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Апрелĕн 25-мĕш тĕлне районри 21 пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав организацисенче парти членĕсемпе кандидачĕсем 282 çын. Çак шутран отчетпа суйлав пухăвĕсенче 3 коммунист çеç пулман. Отчетпа суйлав пухăвĕсем иртнĕ пуçламĕш организацисен ĕçĕсене пуринче те çителĕклĕ тесе йышăннă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсен малтанхи кунĕсенче ЦК ВКП(б) инструкцине пăхни те пулнă. НКВД районри отделенисумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчет итленĕ хыççăн «организаци ĕçне çителĕклĕ тесе шутлас» тесе йышăннипех ертсе кайнă. Малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен нимĕн те кăтартса хăварман. Атнарти пуçламĕш парторганизацинче парти райкомĕн представительне шутлав комисси членĕсен составне суйланă.

ВКП(б) райкомĕ çак çитменлĕхсене сийĕнчех тӳрлетнĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче ВКП(б) райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те тупса палăртаççĕ. Коммунистсем парти райкомĕ коммунистсене политика тĕлĕшĕнчен ӳсме сахал пулăшнине кăтартса параççĕ. Çавăн пекех тата МТ Станцине çителĕксĕр ертсе пынишĕн ВКП(б) райкомне хытă критиклеççĕ.

М. КУЗЬМИН.
ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРНАР. Апрелĕн 2[illegible]-мĕш тĕлне 20 пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çак организацисен ĕçĕсене пуринче те çителĕклĕ тесе хак панă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсене нимĕн сăлтавсăр пыман коммунистсем çукпа пĕрех. Çав пухусенче 155 çын пулнă, пренире вĕсенчен 144 çын тухса калана. МТ Станцинчи пуçламĕш парторганизацинчи отчетпа суйлав пухăвĕнче трактористсене политикăллă воспитани парас, ĕç дисциплинине çирĕплетес ыйтăва татăклăн лартрĕç.

Иртнĕ суйлавсенче пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене учреждени тата колхоз руководителĕсене суйланă ытларах пулнă. Кăçалхи суйлавра пуринчен ытла рядовой работниксене, колхозниксене суйласçĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене суйланисен шутĕнче малтанхи хут суйланисем — 7 çын.

С. СЕРГЕЕВ.
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЕЛЧĔК. Кăçалхи отчетпа суйлав пухăвĕсем, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, активлăрах тата организованнăрах иртеççĕ. МТ Станцинчи коммунистсен пухăвĕнче тракторсен, комбайнсен запаслă пайĕсене учета илес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме кирлине палăртрĕç.

Колхозсенчи тата ялсенчи территориллĕ пуçламĕш парторганизацисенче çуракине хатĕрленсе ирттерес ыйтусем çинче ытларах чарăнса тăраççĕ, колхозсене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене палăртаççĕ.

Н. ВОЛКОВ.
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

* * *

ТАВАЙ. Пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа, самокритикăпа критикăна вăйлăн сарса пынипе иртеççĕ. Пуçламĕш парторганизацисене çителĕклĕ пулăшманнишĕн, уйрăм çынсене пагтие илнĕ чухне ĕç çине çиелтен пăхнишĕн ВКП(б) райкомне хытă критиклеççĕ. Çавнашкалах тата парторганизацисем, коммунистсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсене сахал пулăшнине, çамрăк коммунистсем хушшинче çителĕксĕр ĕçленине, куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен партипе правительство йышăннă постановлинине пурнăçа кĕртсе пырас енĕпе ку вăхăтченех начар ĕçленине палăртаççĕ. Пуçламĕш парторганизацисен ĕçне лайăхлатма хаклă сĕнӳсем параççĕ.

Парторгăнсен суйлавĕсене ирттересси çинчен ЦК ВКП(б) кăларнă инструкцие Тăрăшăпри пуçламĕш парторганизацинче пăснă. Кунта парти членĕн стажĕ çулталăк тултарман çамрăк коммуниста пуçламĕш парторганизаци секретарне суйланă Çак йăнăша сийĕнчех тӳрлетнĕ.

Парторгăнсене малта пыракан, пултаруллă, хастар коммунистсене суйласçĕ.

С. СОРОКИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Производствăна пĕлмен пирки

Хăйĕн отчетĕнче Канаш станцинчи пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Кудрявцев юлташ нумай каларĕ, анчах парторганизаци производствăна мĕнле ертсе пынине, хуçалăх руководителĕсене нарком приказĕсене пурнăçа кĕртме мĕнле пулăшнине кăтартса пама пултараймарĕ. Доклад тăрăх парторганизаци секретарĕ хăй те производствăран аякра тăни, станци экономикине, технологи процесне пĕлменни курăнчĕ.

— Станци лайăх ĕçлет, стахановецсен йышĕ ӳсет, поездсене расписани тăрăх ăсатасси лайăхланать, партин XVIII конференци решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр, — тесе пĕлтерчĕ докладчик. Çапах та вăл хăйĕн сăмахне фактсемпе çирĕплетсе параймарĕ. Станцире стахановецсен хисепĕ мĕнчухлĕ ӳсни, технологи дисциплинине мĕн тарин пăхăнса ĕçлени, уйрăм служащисем хăйсен задачисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни пĕртте курăнмарĕ. Докладчик тĕрлĕ цифрăсем илсе кăтартрĕ пулсан та, вĕсем 1940 çулти ĕçсем çинчен кăна пĕлтереççĕ, кăçалхи ĕçсене çутатса памаççĕ.

— Пирĕн икĕ агитколлектив пур, — тет Кудрявцев юлташ, — агитаторсем рабочисене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ.

Мĕнле вуласа параççĕ, калаçусене мĕнле ирттереççĕ? Кун çинчен доклад-чик шарламарĕ. Тĕрĕссипе илсен, чылай агитаторсем ку ĕçе халĕ те хуть-ăнман иккен. Агитацияллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменни çинчен ĕç дисциплини мĕнле тăни те лайăх каласа парать. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче Указ кăларнă хыççăн 31 çын прогул тунă, 4 çын хăй ирĕкĕпе ĕçрен пăрахса тухса кайнă. Ĕç дисциплинине пăсакансем хушшинче коммунистсем те пур.

Докладчик парторганизаци ĕçне лайăх енĕпе кăна çутатса пама пикенни прени пуçлансан йăлтах улшăнчĕ. Пренире тухса калакан коммунистсем парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн кăтартса пачĕç.

— Рабочисемпе служащисене производство планне тултарассишĕн кĕрешме, — тет Галушин юлташ, — эпир политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыни урлă мар, пуринчен ытларах, административлă методсемпе мобилизацилеме пикенетпĕр. Партин XVIII конференци хыççăн эпир командирсене пухрăмăр та ĕçе урăхлатса çĕнетме хушрăмăр. Çакăнпа хăпланма тытăнтăмăр. Юлашки вăхăтра конференци решенисене те ăнлантарса пама пăрахнă. Мĕн патне çитсе тăтăмăр-ха халĕ? Станца халĕ грузсем тиес плана тултарнисĕр пуçне ытти кăтартусемпе кая юлса пырать.

Пренире коммунистсен авангардлă ролĕ çинчен нумай каларĕç. Парторганизацинче ВКП(б) членĕсем 12 çын, кандидатсем те çавăн чухлех. Вĕсенчен нумайĕшĕсем производствăра ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте производствăра авангардлă роль йышăнмаççĕ-ха. Белоусов юлташ вагонсай цехра тасалăх тăвасси çинчен сахал мар каласать. Анчах ĕçлени курăнмасть. Алимов коммуниста япăх ĕçленĕшĕн кĕçĕн ĕçе куçарнă.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе те сахал ĕçлеççĕ. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пурте вĕренеççĕ, анчах пысăк ăнăçлăхпа мар, чылайĕшĕсем ку тарин-ченех Октябрь революци умĕнхи тăхăр çинче чарăнса тăраççĕ Луков, Гуськов, Алимов юлташсем лекцисене çӳремеççĕ. Беспалов пĕтĕмпе те 3 лекцире çеç пулнă.

Станцире малта пыракан стахановецсен опытне сарассине организацилемен. Калас пулать, кунта ытти-сем хушшине сарма тивĕç, паха опытсем те сахал мар. Сăмахран ака. Ефанов юлташ вагонсем простой тăвассине чакарса пырать. Составитель Павлов, Соловьев юлташсем ертсе пыракан грузчиксен бригади паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Анчах парторганизаци çак паха примерсем çинчен тĕплĕн пĕлмест.

Парторганизаци пачах ĕçлемен, теме çук. Коммунистсен пухăвĕсенче нумай тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе-явнă, парторганизаци ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртнă. Анчах вăл мероприятисенчен сахал пайне çеç пурнăçа кĕртнĕ, йышăннă решенисене, палăртнă мероприятисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемен.

Пуху пысăк активлăхпа иртрĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕ парторганизаци ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухса, халиччен-хи ĕçсене çителĕксĕр тесе хакларĕ, çĕнĕ состава ĕçе лайăхлатма паха сĕнӳсем панă.

М. ТИТОВ.

50 минута кая юлса уçăлнă пуху

ЕТĔРНЕ. Уполнаркомзаг конторинчи пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ апрелĕн 14-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Пуху палăртнă вăхăтран 50 минута кая юлса уçăлчĕ. Пĕр коммунист нимĕн сăлтавсăрах пухăва пымарĕ. Ку факт çакăнти парторганизацинчи партиллĕ дисциплина çирĕп маррине кăтартать.

Пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсем тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлеççĕ: Степанов юлташ — çу тата чăкăт завочĕн директорĕ, Петрова юлташ — йĕтĕн хатĕрлекен конторăн управляющийĕ, ытти-сем Уполнаркомзаг конторинче. Ку пуçламĕш организацине производствăллă принцип тăрăх туман. Унта темиçе учреждените ĕçлекен коммунистсем тăраççĕ.

Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Балунов юлташ хăйĕн докладĕнче коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени, парти членĕсемпе кандидачĕсем мĕнле вĕренни, вĕсене ĕçре тата вĕренӳре мĕнле пулăшни çинчен каласа пачĕ.

Коммунистсем нумайĕшĕ лайăх ĕçлеççĕ. Степанов ертсе пыракан çу завочĕ 1940 çулта государствăна сĕт памалли плана 151 процент тултарнă. 1941 çулти пĕрремĕш кварталти производство программине 419 процент тултарнă. Çамрăк коммунистка Петрова юлташ та тăрăшса ĕçлет. Заготскот конторинче ĕçлекен коммунист Сафеев юлташ та хăйне шанса панă ĕçе партиллĕ ответлăха туйса туса пырать.

Парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Вĕсене отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем лайăх палăртрĕç. Ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе парторганизаци сахал ĕçленĕ. Ку парторганизаци пĕрлештерсе тăракан учрежденисенче 6 çын СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулта июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа пăснă. Вĕсен шутĕнче коммунист Хмелев, комсомолец Малов та пулнă.

Коммунистсене марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăллантарас тĕлĕшпе те ку парторганизаци сахал ĕçленĕ. Пропаганда ыйтуне коммунистсен пухăвĕнче 4 хутчен сӳтсе-явнă, çапах та, ку тарана çитсе те, кунти коммунистсем парти историне тимлесех вĕренме тытăнман.

А. ЧЕХОНИН.

Агитколлектив ĕçĕпе интересленмен

СĔНТĔР. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерĕ чухне хăшпĕр пуçламĕш организацисенче çитменлĕхсем палăртчĕç. Шатракассинчи пуçламĕш парторганизаци партиллĕ пропагандăпа çителĕксĕр ĕçленĕ. 1940 çулта кун çинчен коммунистсен пухăвĕнче пĕрре те сӳтсе-явман. Коммунистсем хăйсен пĕлӳлĕхĕсене ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕ начар ĕçленĕ. Анчах пуçламĕш парторганизаци комсомол организацине пулăшса ертсе пыман.

Агитколлектив плансăр ĕçленĕ. Агитаци ĕçне куллен, умра тăракан задачăсемпе çыхăнтарса туса пыни пулман.

Отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем парторганизаци ĕçне малашне лайăхлатса пыма паха сĕнӳсем панăç.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Юлташла калаçу

Хыймалакассинчи (Ишлей районĕ) пуçламĕш парторганизацинче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вăтам звено тăрăх вĕренекенсемпе юлташла калаçу пулчĕ. Калаçăва 20 çын ытла пынă.

Юлташла калаçăва пынă юлташсем ыйтусем чылай пачĕç. Анчах тухса калакансем 5 çын кăна пулчĕç, ку вăл—çителĕксĕр.

Пуçламĕш парторганизаци секретарне малашне те çакăн пек юлташла калаçусем туса ирттерме хушса хăварчĕç.

И. ВИНОКУРОВ.

Вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленер

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ вĕçленесси çывхарса пырать. Шкулсен, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен, çак вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлес енĕпе кирлĕ ĕçсене туса пынипе пĕрлех, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе те сарсă ямалла. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсемпе хăйăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен пысăк задачăсене пурнăçа кĕртмелле пулать.

Партин XVIII съезчĕ пурне те обязательно вĕрентесси çинчен решени йышăннă. Çак решение пурнăçа кĕртме пире çителĕклĕ таран шкулсем, учительсен кадрĕсем, учебниксемпе пособисем, тĕрлĕ оборудовани кирлĕ Çитес 1941—1942-мĕш вĕренӳ çулĕнче пирĕн республикăра 553 пуçламĕш шкул, 351 туăлимар вăтам шкул, 133 вăтам шкул ĕçлемелле Пĕрремĕш класа çĕнĕрен 26 405 ача, пиллĕкмĕш класа 24 114 ача, саккăрмĕш класа 7 464 ача илмелле Всеобуч шкулĕсенче вĕренекенсен хисепĕ 188 пине çитмелле Çак плана пурнăçа кĕртмешкĕн çутĕç органĕсен, советсен, шкулсен, мĕнпур совет общественноçĕ çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе мартăн 21-мĕшĕнче çирĕплетнĕ план тăрăх, майăн 3-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 1-мĕшĕнчен республикăри мĕнпур ялсенче вĕренĕве явăçтармалли ачасене учета илсе регистрацилемелле Ку учета шкулта халиччен вĕренмен ачасем те, шкулта вĕреннĕ, анчах вĕренсе тухичченех вĕренме пăрахнă ачасем те кĕмелле Çак учета ăнăçлăн та тĕплĕн ирттерни всеобуч планне чăнлипех пурнăçа кĕртме пулăшĕ

Шкула илмелли ачасене учета илни вăл ĕçĕн пуçламĕшĕ анчах-ха. Тата кашни ачан, унăн ашшĕ-амăшĕн материальнăй положенийĕпе паллашни, ачасен ашшĕ-амăшĕсене всеобуч тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă решенисемпе паллаштарни, ачасене шкулта вĕренмешкĕн тивĕçлĕ условисем туса пани кирлĕ Кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче 1—VII классенчен выраннă çăлтавсемсĕрех 1 757 ача вĕренме пăрахнă. Ку факт, паллах ĕнтĕ, пирĕн хăшпĕр шкулсенче вĕренекенсене вĕренме çителĕклĕ условисем туса парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеменнине, ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне кирлĕ таран сарманнине кăтартать. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ хушăра план тăрăх республикăра шкулсем валли государство шучĕпе çĕнĕрен 10 çурт лартса памалла. вĕсенче 2.680 ача вырнаçмалла. Кунсăр пуçне чылай ялсенче ĕççыннисем хăйсен вăйĕпе, самообложени укçипе шкул çурчĕсем лартма йышăннă. Сăмахран, Чкаловски районра ĕççыннисем хăйсен вăйĕпе 4 шкул çурчĕ лартаççĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче — 5 шкул çурчĕ (14 класс валли), Елчĕк районĕнче — 3 çурт т. ыт. те. Шкул çурчĕсене чылайĕшне капитальнăй ремонт тума палăртса хунă. Правительство ку ĕç валли 1 миллион тенкĕ ытла укçа парать. Çĕнĕ шкул çурчĕсене вăхăтра туса пĕтересси, кивĕ çуртсене тĕплĕн юсасси шкул руководителĕсен, советсен, çутĕç органĕсен палăртса задачи пулса тăрать. Шкул çурчĕсене ачасене вĕренме юрăхлă туса çитерес тата шкул валли вутă çителĕклĕ хатĕрлесе парас ĕçре ĕççыннисен, ачасен ашшĕ-амăшĕсен, общественноçăн пулăшăвĕ кирлĕ.

Ачасене вĕренме лайăх условисем туса парас çĕрте вĕренекенсене шкултах алăк çитермелле тăвасси палăртă тăрать. Шкулсенче буфетсем пулмалла. Шкул участокĕсенче, вĕренӳре кирлĕ опытсене туса ирттернипе пĕрлех, буфет валли кирлĕ çимĕçсене туса илесине те организацилемелле. Анчах халлĕхе шкулсене çĕр участокĕсем уйăрса парас ĕçе те туса çитермен-ха. Ку ĕçе хăвăртрах туса çитерсе, шкул участокĕсем çинче çурхи ĕçсене вăхăтра пуçласа ямалла.

Пирĕн шкулсен вĕренӳ пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта марри шкулсен оборудованийĕ çителĕксĕрринчен те килет. Апла пулин те, иртнĕ çулта чылай шкулсем вĕренӳре кирлĕ пособисем, кĕнекесем, инвентарь илме уйăрнă укçана расходласа пĕтермен. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май шкулсене валли кирлĕ оборудовани туянмалла. Кăçал Финанс Халăх Комиссариачĕпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкулсене валли пособисемпе кĕнекесем туянас йĕркене урăхлатнă. Шкулсем кирлĕ пособисемпе кĕнекесен списокĕсене райçутĕç пайĕсене тăратмалла, райçутĕç пайĕсем вара кашни шкула мĕн кирлине кăтартса заявка памалла. Главснаброс тата КОГИЗ магазинĕсем пособисемпе кĕнекесене çав заявкăсем тăрăх тӳрех шкулсене ярса параççĕ. Шкулсем илнĕ пособисемпе кĕнекесемшĕн расчет райçутĕç пайĕсем тăваççĕ. Кашни шкулăн, ĕçе вăраха ямасăр, райçутĕç пайĕсене хăйсене мĕн кирли çинчен пĕлтерес пулать. Пособисемпе кĕнекесем илме правительство пысăк укçа-тенкĕ уйăрса хунă, çав укçа-тенкĕпе тивĕçлĕн усă курма, ăна тĕрĕс расходлама тăрăшмалла

Вĕренӳ çулне вĕрентӳпе методика тĕлĕшĕнчен те тĕплĕн хатĕрленмелле. Пирĕн республикăри учительсен составне образовани тĕлĕшĕнчен илсе пăхсан, вĕсенчен чылайĕшĕ шкулта ĕçлеме тивĕçлĕ образовани илменни курăнать. Хальхи вăхăтра V—VII-мĕш классенче ĕçлекен учительсем хушшинче çав классенче ĕçлеме тивĕç паракан образовани илнисем 29 процент кăна шутланаççĕ, VIII—X классенче ĕçлекен учительсенчен тивĕçлĕ образовани илнисем 49 процент. Учительсен образованийĕ çителĕксĕрри вĕренӳ çулне методика тĕлĕшĕнчен хатĕрленнессин рольне тата ытларах ӳстерет. Кашни учитель çуллахи каникулсем вăхăтĕнче хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Нимĕн маллан çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вĕрентмелли программăсемпе, учебниксемпе, методикăсемпе тĕплĕн паллашас пулать. Кунсăр пуçне кашниннех педагогика тата методика ыйтăвĕсене çутатса паракан кĕнекесемпе журналсене вуласа тухмалла. Кашни преподаватель хăйĕн предмечĕсемпе ĕçе малтанах тĕплĕн планласа хуни кирлĕ. Пирвайхи уроксене валли плансем, конспектсем хатĕрлесе хумалла. Кашни учителĕн, çуллахи пушă вăхăтна усă курса, хăйне вĕрентӳре кирлĕ пулакан пособисене, таблицăсене, схемăсене туса хатĕрлес пулать.

Районри педагогика кабинечĕсен, методика пĕрлешĕвĕсен учительсене сак ĕçре кулленех пулăшу памалла. Пуринчен ытла çамрăк учительсене пулăшу парас ĕçе сарса ярас пулать. Ку тĕлĕшпе вĕсене консультаци памашкăн лайăх ĕçлекен учительсене, методистсене, наука тĕлĕшпе ĕçлекенсене ĕçе явăçтармалла

Вĕренӳ çулне хатĕрленесси — çутĕç органĕсем, шкулсем, советсем умĕнче чортре тăракан паллă задача. Ку ĕçе вăраха ямасăрах, тивĕçлипе тытăнмалла. Иртнĕ çулсенчи пек, ку ĕçре кампанейщина, ĕçе малтан вăраха ярса кайран васкавлăн ирттерни пулмалла мар Çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илессишĕн халех социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Пирĕн республикăра çутĕç тĕлĕшпе çитĕнӳсем сахал мар. Республикăра государство шанса панă ĕçе большевикла туса пыракан шкулсен, çутĕç работникĕсен йышĕ пĕчĕк мар. Республика вĕренӳ çулне большевикла хатĕрленсе кĕтсе илессине шанма пур сăлтавсем те пур.

А. ОТАЧКИН.
ЧАССР Наркомпросĕн шкул управленийĕн старший инспекторĕ.

Колхозсенчи парторганизацисем çураки умĕн

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсем тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсене социализмлă ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарса пыраççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисен халĕ иртсе пыракан отчетпа суйлав пухăвĕсенче ялти коммунистсем хăйсем XVIII партконференцин решенийĕсене тата СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртес, колхозсене организацилепе хуçалăх енчен çирĕплетес тата кăçалхи çуракине ирттерес тĕлĕшпе мĕнле кĕрешнине тĕрĕслесе тухаççĕ.

Хăйсен умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс ăнланса илнĕ пуçламĕш парторганизацисем çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме колхозниксен мĕнпур массине мобилизацилеççĕ. Вĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе сăмахпа мар, конкретлă ертсе пыраççĕ.

Йĕпреç районĕнчи «Çиçĕм» колхоз çак юлашки çулсенче районра кăна мар, республикăра та чи малта пыракан колхозсен ретĕнче тăрать. Ку колхозри пуçламĕш парторганизаци кăçалхи çуракине пур енчен те хатĕрленсе, ăна организованно ирттересшĕн кĕрешнĕ, ку ĕç тавра колхозниксен сарлака массине мобилизацилеленĕ. «Çиçĕм» колхоз халь çуракине тухма хатĕр. Кун çинчен парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче те коммунистсем хăюллăнах каларĕç.

Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕ тĕлне СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртни малта пыракан, ĕç çине социализмла пăхакан колхозниксене ĕç кунĕ тăрăх паракан тупăш мĕнле ӳснине шутласа тухнă. Çакăн çинчен колхозниксене тĕплĕн каласа ăнлантарнă. Çапла туни çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăшнă. Колхоз халь çуракине тухма, кашни колхозник çуракинче хăй ăçта тата мĕнле ĕçре пулассине пĕлсе тăрать.

Пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче коммунистсем парторганизацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене тупса палăртаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кивĕ Актайри территориллĕ пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче парторганизаци колхозсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртнă. Киров ячĕпе тăракан тата «Красный партизан» колхозсем иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене çителĕксĕр вĕçленĕ, кăçал та çуракине питĕ сӳрĕккĕн хатĕрленеççĕ. Çак икĕ колхозĕнче те ялхуçалăх машинисене халĕ те юсаса çитермен, удобренисем кирлĕ таран кӳрсе килмен. Колхозсенче ĕç дисциплини çирĕп мар. Анчах та пуçламĕш парторганизаци колхозсен хуçалăхлă пурнăçĕпе сахал интересленет. Çакна пула ĕнтĕ тырпул тухăçне 1941 çулта мĕн чухлĕ ӳстермелли плана звеносем патне çитермен, кунти коммунистсем партипе правительство решенийĕсем çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе активлăн хутшăнмаççĕ. Канаш районĕнчи Аччари пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче те колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕç. Кунти колхозсенче вăрлăхсене акма юрăхлă кондицине çитермен. Çапах та Аччари пуçламĕш парторганизаци ку ыйтупа пачах интересленмен.

Çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене большевикла хăюллăхпа тупса палăртмалла. Сӳпĕлтетме çеç юратакан, ĕçе организацилеме пултарайман çынсене тăрă шыв çине кăлармалла, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене çуракине большевикла хатĕрленсе ирттерме мобилизацилемелле. Çакă вăл ялсенчи парторганизацисен пысăк задачи.

Пуçламĕш парторганизацисен çураки вăхăтĕнче ĕçлеме халех тĕплĕн план туса хатĕрлемелле, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, агитаторсене, стена хаçачĕсен редакторĕсене, чтецсене уйăрмалла. Уйхир ĕçĕсем пынă вăхăтра партиллĕ-политикăллă ĕçе производствăллă бригадăсенче, звеносенче туса пымалла. Çапла майпа çуракин малтанхи кунсенчех пысăк тухăçлăхпа тата пысăк пахалăхпа ĕçлессишĕн, машинăсемпе туллин усă курассишĕн социализмлă ăмăртупа стахановла движенине анлăн сарса ямалла. Çак ĕçре коммунистсем колхозниксене пример кăтартмалла.

Колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисен хăйсене устав панă контроль правипе туллин усă курмалла. Кашни звено, бригада агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçланине тĕрĕслесе тăмалла, ĕçе тĕрĕс организацилемелле, обезличкăпа уравниловкăна йăлтах пĕтермелле.

Çуракине пысăк пахалăхпа ирттересшĕн коммунистсем ответ тытаççĕ. Астăвас пулать: парторганизацисен тата коммунистсен ĕçне парти вĕсен сăмахĕсене, обязательствисене кура мар, практикăллă ĕç туни тăрăх хаклать.

Çуракине пысăк пахалăхпа, агротехника правилисене тăхăнса, кĕске срокра тата пысăк хастарлăхпа ирттересси—ялти кашни парторганизацин тата кашни коммунистăн хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Вĕренӳпе воспитани ĕçне вăйлатас пулать

ЕТĔРНЕ. Нумай пулмасть Кăташ ялсовет исполкомĕн сессийĕ ялсоветне кĕрекен шкулсен ĕçĕсем çинчен сӳтсе-яврĕ. Шкулсен ĕçĕнче çитменлĕхсем пурри, чылай ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманни курăнчĕ.

Хăшпĕр ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманни вĕсем шкула япăх сӳренинчен тата ача ашшĕ-амăшсем хăйсен ачисене вĕренӳре çителĕклĕ пулăшса пыманнинчен килет, теççĕ шкулсен руководителĕсем. Ку вăл чылай енчен тĕрĕс. Анчах питех те шел, ялсоветне кĕрекен виçĕ ялти шкулĕ те кăçалхи çул ача ашшĕ-амăшсемпе пĕр пуху та туса ирттермен, шкулсен ĕçĕсемпе ачасен ашшĕ-амăшсене паллаштарман. Ашшĕ-амăшсен пухуне çӳркуннехи каникул вăхăтĕнче тин тума шутлаççĕ-ха.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсе килет. Çӳркуннехи испытанисем çывхараççĕ. Анчах кунти шкулсенче çуркуннехи испытанисене япăх хатĕрленеççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе те, шкул çулне çитнĕ ачасене шута илнисĕр пуçне, нимех те туман.

Ялсовечĕн сессийĕ вĕренӳ çулне ачасем пурте вĕренӳре ĕлкĕрсе пыннипе вĕçлемелле, çитес вĕренӳ çулне хатĕрленме халех тытăнмалла, тесе йышăнчĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Миллион çурă ачасем пионерсен лагерĕсенче пулаççĕ

ВЦСПС секретариачĕ пионерсен лагерĕсем 1941 çулта тумалли ĕççен планне çирĕплетнĕ. Çуллахи вăхăтра профсоюз организацийĕсем шкул ачисене 1.500 пин çынран кая мар лагерьсене яма тивĕçлĕ. Лагерьсенче пуринчен малтан стахановецсен, Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ рабочисемпе служащис

Çуракине большевикла ирттерер!

Эпир акана тухма хатĕр

Иртнĕ çулта пирĕн колхоз гектартан вăтамран 17,8 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Çак çитĕнӳ вăл колхозниксем колхоз производствинче вăй хурса ĕçленипе, агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçа кĕртнипе пулнă. Калас пулать, уйра пирĕн яланах хĕрӳллĕ ĕç пынă, тырпула акас, çумлас, вырас, çапса пуçтарас ĕçсене вăхăтра туса пынă.

Колхоз кăçал тырпул тухăçлăхне татах та ытларах ӳстересшĕн кĕрешет. Кашни колхозник, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленипе хавхаланса, большевикла хастарлăхпа ĕçлеме тытăнчĕ. Кăçал эпир çĕре çемçетсе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттертĕмĕр те ĕнтĕ. Районран панă план тăрăх пирĕн минеральнăй удобренисем 15 тонна хатĕрлемелле пулнă, эпир 40 тонна хатĕрлерĕмĕр. Çавăн пекех тата уя 3.300 лав тислĕк, 200 лав торф кăларнă, 80 центнер кĕл, 4 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Çĕре çав япаласемпе çемçетни, паллах, тухăçлă тырпул туса илме пысăк пулăшу парать.

Халĕ колхоз акана пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Ялхуçалăх инвентарĕсем, ĕç вăйĕ, лаша кӳлмелли тавраш-сем, вăрлăхсем пур культурăсем тăрăх та ытлашшипех хатĕрленĕ. Кашни бригада, звено патне план çитернĕ, пурте вĕсем хăйсен планĕсемпе паллашнă. Пĕтĕм ака ĕçне эпир 12 кунта туса пĕтерме шутлатпăр, пучахлă культурăсене 5 кун хушшинче акса хăварма палăртнă.

Пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана эпир ытлашшипех тултарнă. Сăмахран, сĕт-çу ферминче ĕнесен шутне 50 пуç çитермелле, пирĕн халь 60 пуç пур. Чăх-чĕп, сурăх фермисем те пур. Выльăхсем пурте лайăх условире, фураж çителĕклĕ.

Партипе правительство пирĕн республикăри колхозниксене ĕçшĕн хушсе тӳлесси çинчен йышăннă постановлени ĕçре пысăк улшăнусем тума пулăшать. Иртнĕ çулти ӳсĕмсене çирĕплетсе, кăçал эпир татах та пысăкрах ӳсĕм тăвасешĕн кĕрешетпĕр.

ЕЖОВ.

Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Колхозниксен хастарлăхне çĕклентерсе пыма пĕлмеççĕ

«Правда» колхоз правленийĕн канцелярине тăтăшах çынсем килсе тухаççĕ: пĕри ятарласа хăйĕн шухăш-кăмăлĕсем çинчен колхоз председателĕпе е счетоводпе калаçса татăлма, тепри кăçал хăй тунă ĕçкунĕсем çинчен пытă мĕн пĕлмелле пырать.

1941 çула кĕнĕрнепе кĕçех тăватă уйăх çитет ĕнтĕ. Колхозра мĕнле ĕçшĕн мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тӳлемелли халĕ те паллă мар. Çакна пула пĕр колхозник те хăй кăçал миçе ĕçкунĕ тунине калама пултараймасть.

Канцелярине Мария Трофимова пырса кĕрет. Вăл нумай хушă сăмах тапратса яраймасăр чăлан алăкĕ çумĕнче тайăлса тăрать. Колхозра ăна чăх пăхма уйăрнă.

— Сергей пичи, — терĕ вăл темĕнле хĕрелнĕ пек пулса,—мана чăхсем пăхнăшăн миçе ĕçкунĕ параççĕ? Нимĕн те пĕлместĕп. Мана: — Эсĕ чăх пăхакан пулатăн, терĕç те урăх пĕр сăмах та каламарĕç. Чăх пăхни манăн тен ахалех пулать?

Сергей пичи тени колхоз счетоводĕнче ĕçлет, Трофимов хушаматлă вăл, Мария Трофимова ыйтăвĕ çине нимĕнле ответ параймасăр тăчĕ.

— Ĕçлени ахаль пĕтмест-ха, унпăн хăрамалли çук. Халĕ пирĕн нормăсем хатĕр мар. Айда, кайса ĕçлĕр, унпăн кайран ĕçкунĕсем курттăм пулаççĕ...

Екатерина Трофимова сыснасем пăхать. Вăл хаçатсем çинче «темĕнле постановлени тухнине» илтнĕ, унта сысна пăхакансем çинчен асăннă вырăнсем пулмалла, планпа пăхнинчен ытлашши пăхса çитĕнтернĕ темиçе çăвăртан сысна пăхакана хăйне темиçе çăвăр пулмалла. Çакăн çинчен тĕплĕнтерех пĕлме вăл колхоз правленине чупса пынă.

— Сергей пичи, пирĕн кашни сысна аминчен планпа миçе çăвăр илмелле? Колхозăн ун пек план пур-и?

Сергей пичи хăй те, Екатерина пекех, ун пек плансем çинчен пĕлмест. Мĕн тумалла? Екатерина вăл план çинчен ыйтса мĕн пĕлесшĕн? Колхозниксем колхоз правленине пырса ларсан та, ĕçре чухне те «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени пирки сăмах тапратаççĕ. Ун çинчен вĕсем тĕплĕнрех пĕлесшĕн тăршаççĕ.

Колхоз председателĕ Степан Тимофеев та колхозниксемпе пĕрле пухăнса ларнă чухне çапла калаçма тытăнать:

— Питĕ паха постановлени вăл. Ăна пирĕншĕн кăларнă пек туйăнать...

Колхозра вăл постановлени çинчен ăнлантарса парасси тивĕслипе пулса пымасть. Вăл постановленипе кашни колхозник тĕплĕн паллаштармалла.

Колхоз çуракине начар хатĕрленсе пырать. Хĕллехи вăхăтра туса çитереймен ĕçсем темĕн чухлĕ.

Районри çĕрĕç пайĕ «Правда» колхоза 100 лав юшкăн кăларма задани панă. Пĕр лав та кăларма ĕлкĕреймен. Тислĕк кăларас плана 50 процент кăна тултарнă, минераллă удобренисене 40 процент кăна кӳрее-килнĕ.

Лаша витисен килкартинче темĕн чухлĕ улăм сапаланса выртать. Унта ăна лашасем валли тесе пăрахса панă.

Конюхсем лашасене час-часах тасатмаççĕ.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Анчах вĕсене кулленхи ĕçе организацилесе ертсе пыма пĕлмеççĕ. Колхоз çавăнпа ĕнтĕ кая юлса пырать.

ИВ. МОСЕЕВ.

Тури Кăканарти «Правда» колхоз, Калининский район.

Çĕрулми вăрлăхне формалинпа çăвасси

Юлашки çулсенче çĕрулми чирĕсем—ризоктония тата парша—чылаях сарăлнă. Сăмахран, 1940 çулта ризоктонипе 1249 тонна, паршапа 4501 тонна çĕрулми сиенленнĕ.

Лартма уйăрнă çĕрулми вăрлăхне çак чирсенчен тасатас пулсан формалин шĕвекĕпе çăвас пулать. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: 40 процентлă формалинăн пĕр пайне 200 пай шыв çинче ирĕлтереççĕ. Çĕрулмине корзинкăна хывса формалин шĕвекне чиксе 3—5 минута тытаççĕ, унтан ăна михĕсем е брезент пайне хурса сăрхантараççĕ. Юлашкинчен, çĕрулмине сулхăна хурса е уçă çĕрте типĕтеççĕ.

Çĕрулмине лартас умĕн 20—30 кун малтан та формалин шĕвекĕпе çума урать. Анчах кирек мĕнле пулсан та çунă вăрлăха лайăх типĕтмелле.

Пĕр тонна çĕрулмине çума 40 процентлă формалин 700 грамм кирлĕ. Савăт-сапа валли катка та юрать.

Формалин шĕвекĕпе çуса типĕтнĕ çĕрулмине чирсенчен таса савăт-сапасенче усрамалла. Савăт-сапасене (михĕсем, корзинкăсем, ещĕксем) те формалин шывĕпе çуса тасатас пулать. Çакна тума 40 процентлă формалинăн пĕр пайне 40 пай шывра ирĕлтереççĕ (пĕр процентлă шĕвек). Çуса е тасатса хатĕрленĕ савăт-сапана тултарнă, çуса хатĕрленĕ çĕрулми çине формалин шывĕпе лейкăран е алăпа сапакан опрыскивательтен сапаççĕ. Унтан вĕсене штабеля пуçтарса брезентпа витсе 2 сехет хушши сăрхантараççĕ. Юлашкинчен, брезента катертсе типĕтеççĕ.

Формалин шывĕпе çунă çĕрулмисене усракан хранилищĕне те формалин шывĕпе çумалла.

Т. НИКИТИН.

Чăваш АССР Наркомземĕн агрономĕ.

Пысăк пахалăхпа

Иртнĕ кунсенче Улăп-Шăматри (Советски район) «Спутник колхозника» колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Çак пухура партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление сӳтсе-яврĕç. Колхозниксем çуракине, пысăк пахалăхпа, 6 кун хушшинче вĕçлеме пулчĕç. Паянхи куна колхоз вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрленĕ, вăрлăхсене протравить тума материалсем те хатĕр. Ялхуçалăх машинисене, хăмăт-ĕнерчĕк таврашĕсене юсаса çитернĕ. Колхозра уйрăмăнах вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлессишĕн тăрăшаççĕ. Кăл, кайăк-кĕшĕк тислĕкне кирлĕ тараншах хатĕрленĕ. Кашни бригада хăйĕн участокĕнчи çĕре ытларах çĕнетме тăрăшать. Вăл тĕлĕшпе И. Владимиров бригади малта пырать.

А. МИТРЯКОВ.

Трахома чирне пĕтересшĕн кĕрешĕве вăйлатмалла

Чăваш республикинче трахома чирне пĕтерес тĕлĕшпе юлашки çулсенче пысăк ĕçсем туса ирттернĕ пулсан та, халăхи вăхăтра çак ĕç вăйсăрланни палăрать. Уйрăм районсенче трахома чирне пĕтерес ĕç мĕнле пулса пынине тĕрĕслемелле. Çакна кăтартса пачĕ: чылай районсенче трахома чирне тĕп тăрас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, сывлăха сыхлас ĕçри работниксем хăйсен пултарулăхне кăтартмаççĕ.

Елчĕк районĕнче трахома чирĕпе чирленисем çаллах чылай. Халĕ тата трахома чирĕпе çĕнĕрен чирленисене палăртнă. Аслă Елчĕкри вăтам шкулта вĕренекенсенчен 36 проценчĕ трахома чирĕпе чирлеççĕ. Кĕçĕн Елчĕкри шкулта вĕренекенсенчен 24,6 проценчĕ чирлет, çĕнĕрен 32 ачана трахома ернĕ. Тăрăм, Эйпеç шкулĕсенче те трахома чирĕпе чирленисем чылай.

Çакă вăл вырăнсенче трахома пункчĕсем начар ĕçленинчен килет. Аслă Елчĕкре трахома пункчĕн ятарласа тунă çурт пур. Трахсестра Петрянкина юлташ ăпăх ĕçлет. Тăрăмри трахома пункчĕ те йĕркеллĕ ĕçлеймест. Трахсестра трахома чирĕпе миçе çын чирленине те пĕлмест. Пунктра оборудованисем çителĕклĕ, анчах вĕсемпе пĕлсе усă курни çук. Çак пункт çумне больницăран Ефимова юлташа çирĕлетнĕ. Анчах вăл та трахсестрана ĕçре практикăллă пулăшу сахал парать.

Çак фактсем вĕсем Елчĕк районĕнче трахома чирне пĕтересшĕн çителĕксĕр ĕçленине кăтартса параççĕ.

Трахома чирĕпе кĕрешес ĕç Канаш районĕнче те çителĕклĕ мар. Уçырмари трахсестра Сергеева юлташ трахома пунктне таса мар тытать, медикаментсем унта-кунта сапаланса выртаççĕ. Сергеева трахома чирĕпе миçе çын чирленине пĕлмест, куçа сыватма çӳрекенсене хут татăкĕ çине кăна учета илсе пырать. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Савельев юлташ трахома пункчĕ валли çурт тупса парасси çинчен сăмахпа çеç калать, ĕçĕ çук. Трахома пункчĕ çумне çирĕплетнĕ врач Цируллина юлташ 1940—1941 çулсенче пунктра пачах пулман.

Кăр-Мамири Михайлова трахсестра та ăпăх ĕçлет. Пунктăн оборудованийĕ начар. Вăл та трахома чирĕпе чирленисене пĕлмест, трахомăна пĕтересси çинчен каласа ăнлантармасть.

Трахома чирĕпе кĕрешес ĕçре санитарипе профилактика ĕçĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах, тĕрĕсленĕ пунктсенчен пĕринче те çак ĕçсене ирттермеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене культурăллă пурăнма вĕрентмелле. Трахпунктсем ку тĕлĕшпе питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Трахома чирне пĕтерес ĕçре участокченчи больницăсем пысăк вырăн йышăнма тăраççĕ. Участока кĕрекен трахома пункчĕсене врачсен кулленех пулăшса тăмалла.

Трахома пункчĕсен пур енĕпе те хăтартуллăн ĕçлемелле. Трахработниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçарса пымалла.

Районсенчи сывлăха сыхлав пайĕсен тата ялсоветсенчи трахработниксен ĕçне тĕрĕслемелле. Пултарайман работниксене ĕçрен хăтармалла. Çакна палăртмалла: хăшпĕр вырăнсенче ялсоветсемпе колхоз правленисем трахома пункчĕсене кирлĕ пулăшу памаççĕ. Ялсоветсемпе колхоз правленисен трахома пункчĕсене çуртсем, инвентарьсемпе оборудованисем тупса пама, сметăпа (пăхнă укçа-тенкĕне вăхăтра парса тăма тата чирлĕ çынсене сывалма çӳреме пулăшас пулать. Ялсоветсем çумĕнчи культура комиссийĕсем те трахома чирне пĕтересшĕн кĕрешес ĕçе пуçарса ертсе пымалла.

Халăх хуçалăхĕнче кирек мĕнле отрасль пулсан та унăн план пур. Вăл плана кулленех тултарса пырассишĕн кĕрешеççĕ. Анчах трахома чирне пĕтерес ĕçре плана çавнашкал тултарассишĕн кĕрешни, плана мĕнле тултарса пынине тĕрĕслени çук.

Чăвашсен трахоматозлăх институт умĕнче те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вăл хăйĕн врачĕсене хутран-ситрен кăна районсене янă. Çакă, паллах, çителĕксĕр. Институт ĕçне тĕпренех çĕнетсе урăхлатни кирлĕ. Институтри ăслăлăх ĕçĕ клиникăн материалĕсем тăрăх кăна мар, вырăнсенчи больницăсен, трахома пункчĕсен материалĕсем тăрăх пулса пымалла. Мĕншĕн тесен вĕсем ăслăлăх енĕпе те, практикăллă ĕç тĕлĕшпе те паха материалсем пама пултараççĕ.

Çаксемпе пĕрлех трахоматозлăх институтра курссем организацилесе, çав курссенче участокри врачсем хатĕрлеме май пур. Трахработниксен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе районсенче пилĕккунлăх семинарсем е курссем организацилемелле.

Республикăра трахома чирне пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешĕве темиçе хут вăйлатмалла. Çав ĕçе куллен туса пымалла. Çавăн чухне кăна трахома чирне тĕп тума пулать.

А. ШУЛЬПЕНКОВА.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ.

Пулăсем аван хĕл кăçрĕç

КАНАШ. «Хĕрлĕ хĕм» колхозра пысăк пĕве пур. Вăл пĕве ял варринче илемлĕн сарăлса выртать. Виçĕ çул каялла колхоз çав пĕвере карп пулăсем ĕрчетме тытăннă. Пĕвери пулăсем колхоз аван пăхать. Кăçал та пулăсем аван хĕл кăçрĕç.

Пулăсем çурхи шывпа юхса каясран канавсенче сеткăсем лартса тухнă. Пулăсем вăлча сапнă хыççăн колхоз вĕсене тытма хатĕрленет.

И. КУДРЯВЦЕВ.

Курорта каймалли путевкăсем

Çĕршыври курортсенче çуркуннехи сезон пуçланнă. Санаторисемпе канмалли çуртсене каякансен хисепĕ кун-серенех ӳссе пырать. Пĕтĕм Союзри курорт конторисем (Мускавра) республикăсен, крайсен тата облассен центрĕсенче курорт конторисем 65 контора тунă, вĕсем вырăнти халăха путевкăсемпе курсовкăсем парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Апрель пуçламĕшĕ тĕлне вĕсем ĕççыннисене 55 миллион тенкĕлĕх яхăн путевкăсем сутнă.

Ялла вырăнсенче путевкăсем туянмалли йĕрке нумай çăмăлланать. Çак ĕç валли районсенче хăйсен врачебнăй курортно-отборочнăй комиссисем пулаççĕ. Инçетри пунктсенче пурăнакан колхозниксене участокри больницăсен врачĕсем панă заключенисем тăрăх та путевкăсем сутма ирĕк панă. Уйхир ĕçĕсене хутшăнман колхозниксем валли 2 пин путевка ытла уйăрнă та ĕнтĕ, халăхи вăхăтра татах 10 пин путевка салатса параççĕ.

Завод-сад

Краматорскри Сталин ячĕпе тăракан йывăр машиностроени заводĕнчи рабочисем тĕрĕссипех ĕнтĕ хăйсен предприятине завод-сад тесе ят панă. Завод территорийĕ çинче топольсем, вĕренесем, каштансем тата ытти тĕрлĕ йывăççем 11,5 пин тĕп шутланаççĕ. Йывăççемпе тĕрлĕ ӳсен-тăрансем пурĕ 22 гектар çĕр йышăнса тăраççĕ.

Оборонăпа физкультура активĕн пухăвĕ

Апрелĕн 23-мĕшĕнче оборонăпа физкультура активĕн хулари пухăвĕ пулса иртрĕ. Вăл пухура комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсен итогĕсем çикнĕ ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Пароятников юлташ доклад туса пачĕ.

Комсомолецсен гимнастикăллă ăмăртăвĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн республикăра аван иртнĕ. Ăмăртусем пуçланичченех тренировкăсенче çамрăксем 30 пин çынна яхăн пулнă. Докладчик калана тăрăх, гимнастикăллă ăмăртусене 56.000 çын хутшăннă, вăл шутра комсомолецсем — 31 пин çын. Ăмăртăва хутшăннисенчен чылайăшĕ ГТО комплексĕн гимнастика нормисене панă.

Ăмăртусене çамрăксем çавăн пек йышлăн хутшăнни — вăл гимнастикăна малалла ăнăçлăн сарса пыма май парать. Анчах, ку ĕçре пулнă çитменлĕхсене те манса хăвармалла мар. Çакна калас пулать. Пирĕн комсомолпа физкультура организацийĕсем массăллă ăмăртусем ирттернĕ чухне, вĕсене пахалăх енĕпе лайăхрах организацилес ĕç çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Паллах, çамрăксене ытларах явăçтарма тăрăшни тĕрĕс, çав вăхăтрах вăл ăмăртусем физкультурăпа спорт ĕçĕнче çĕнĕ результатсем памалла.

Кăçал спортăн çуллахи сезонĕ массăллă кроссем ирттернипе пуçланмалла. Профсоюзсен, комсомолецсен кроссене хатĕрленсе ирттерме халех тытăнни кирлĕ. Вăл кроссене ăнăçлăн ирттересси пĕтĕмпех хатĕрленӳ ĕçĕнчен килет.

Хĕллехи вăхăтра пиншер çамрăксем ГТО комплексĕн йĕлтĕр нормисене патĕç. Çуллахи вăхăтра физкультура енĕпе туса ирттерекен массăллă мероприятисене пĕтĕмпех ГТО нормисене парас залачăпа çыхăнтарса туса пымалла. Вăл ĕçсем çĕнĕрен çĕршер спортсменсене, пултаруллă физкультурниксене палăртма пулăшмалла.

Спорт çитĕнĕвĕсене çĕнетсе лайăхлатса пымалла. Ку енĕпе пирĕн республикăра ĕç питех те начар пырать. Çĕнĕ рекордсем сахал. Сăмахран, арçынсем 100 метра чупассипе 1937 çулта тунă рекорд халĕ те çаплипех юлать. Çавăн пекех, 1000 метр чупассипе тунă рекордăн та результатĕ кивелнĕ. Пĕтĕм Союзри рекорд 14 минута та 37 секунда пулсан, пирĕн республикăра ку енĕпе кăтарнă рекордлă результат 16 минута та 15 секунда. Çакă икĕ цифра та ĕнтĕ спорт çитĕнĕвĕсен результачĕсем мĕн тери юлса пынине лайăх кăтартса параççĕ. Физкультура организацийĕсемпе спорт обществисен ку тĕлĕшпе малашне тимлĕнрех ĕçлемелле пулать. Виç-тăватă çул каярах палăртнă рекордсменсемпе çеç ĕçлес, вĕсем çине çеç шанса ларас йăлана пăрахса, массăсем хушшинче ытларах ĕçлемелле, çĕнĕ спортсменсене палăртмалла, вĕсене вĕрентсе пырас ĕçе лайăхлатмалла.

Çуллахи сезон вăхăтĕнчи тепĕр пысăк ĕç — вăл шыв спортне сарса пырасси пулса тăрать. Шыв хĕрринче пурăнатпăр пулсан та, ку тĕлĕшпе юлса пыратпăр. Шыв спорчĕ енĕпе ĕçлекен инструкторсен кадрне вĕрентсе хатĕрлемелле. Кăçалтан пуçласа спортăн ку енĕпе те пысăк улшăнусем тумалла. Унсăрăн эпир Хĕрлĕ Çар ретне пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ çамрăксене пама пултараймастпăр.

Çавăн пекех, оборонăпа физкультура активĕн пухăвне Осоавиахим Чăваш АССР Центральный Совечĕн председателĕ Павлов юлташ Осоавиахим членĕсен йĕлтĕрлĕ-командăллă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен пĕлтерчĕ. Унтан вăл ăмăртура мала тухнăшăн Осоавиахим хула организацине Осоавиахимăн Чăваш АССР Центральный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне панă.

Допризывниксем шофер пулма вĕренеççĕ

ЭЛĔК. Районра шоферсен курсĕ уçăлчĕ. Унта допризывниксем 50 çын вĕренеççĕ. Допризывниксем Хĕрлĕ Çар ретне кайичен шофер специальноçне вĕренсе çитме тăрăшаççĕ.

Н. ДМИТРИЕВ.

«Волга» колхозăн (Красноармейски р.) малта пыракан çыннисем. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): колхоз питомникĕнче ĕçлекен 72 çулхи колхозник Егор Фомин, вăл 1940 çулта пĕччен 350 ĕçкунĕ тунă; колхозри пиçмоносец Илья Ефремов, лайăх ĕçленĕшĕн ăна районри сыхăну конторине темиçе хутчен те премиленĕ; 1-мĕш бригадири стахановка Анна Гурьева тата 2-мĕш бригадири стахановка Клавдия Кашина.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Вăмăршăри ултавçăсем

Юлашки икĕ уйăх хушшинче сводкăсенче Шăмăршă МТ Станцийĕ тракторсене юсас плана 100 проценчĕпех тултарнине курма пулатчĕ. МТС директорĕ Курманин юлташ республикăри организацисене тракторсене 100 процентчĕпех юсаса пĕтернĕ, тесе пĕлтерсе тăнă. Директор Курманин тата старший механик Виноградов «лайăх» ĕçленĕшĕн пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ премие илме ĕлкĕрнĕ.

Анчах МТС руководителĕсем государствăна улталас çул çине тăнă, дирекци те, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ те тракторсене юсас ĕçе пĕтĕмпех старший механике Виноградова шанса панă. Вĕсем механик ĕçне тĕрĕслемен. Çапла, механик—дирекцине, дирекци—республикăри организацисене улталанă.

Тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, юсанă тракторсен пахалăхĕ çителĕксĕрри палăрчĕ. 17-мĕш №-тĕ трактор колхоза та çитеймен, вăл уйрах чăрăнса ларнă, ку трактористсăр 23 пай çитмест, хăшпĕр пайĕсене киввисене лартса янă. Халь татах 7 трактора пахалăхсăр юсанине тупнă.

Тĕлĕнмелле факт: Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн приказĕ тăрăх, Шăмăршă МТ Станцин Чкалогский МТ Станцине 3 трактор памалла пулнă. Çак хыпара старший механик Виноградов пĕлет те, трактор пайĕсене кăларса илме тытăнать. Чкаловскине çĕмĕрĕк тракторсем парас шухăш пулнă. Халĕ вăл тракторсене Чкаловскине ямаççĕ, анчах та трактор пайĕсене тупаймаççĕ, тракторсем пайсемсĕр лараççĕ.

Шăмăршă МТ Станцинчи старший механик Виноградов хăйĕн мастерскойĕнчи трактор е автомашина пайĕсене кăларса илет те, хăйĕн директорнех сутать. Çапла вара, МТС директорĕн политикăллă суккăрлăхне пула, Виноградов сиенлĕ ĕçсем тăвать. Государство пурлăхне çаратакан механике хӳтлеççĕ. Ăна лайăх ĕçлекен çын вырăнне хураççĕ, çитменлĕхсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăлармаççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ, вăлах МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Платонов юлташ парти райкомĕнче яланах: эпир тракторсене мĕнле юсанине хамăр тĕрĕслетпĕр, пирĕн механиксем аван ĕçлеççĕ, тесе мухтанчĕ.

Анчах та вăл тракторсене юсас ĕçре хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнманни халĕ ĕнтĕ уçăнах палăрчĕ.

Д. ОБОФОРОВ.

Район пуянлăхĕ тата вырăнти организацисен пуçарулăхĕ çинчен

ЕЛЧĔК. Юлашки çулсем хушшинче районра крахмал завочĕ, пăс вăйĕпе ĕçлекен арман, сĕтел-пукансем, кӳршек-чӳлмексем тăвакан мастерскойсем тунă. Çĕнĕрен 3 промартель организацленĕ.

Темиçе çул каялла район сĕтел-пукансене, кӳршек-чӳлмексене, кил хушшинче кирлĕ ытти вак-тĕвек ăпаласене урăх районсенчен кӳрсе килнĕ, çавна май укçа-тенкĕ усăсăр нумай расходланнă. Халĕ çав ăпаласене районрах туса кăларассине организацленĕ, вăл суту-илӳ организацисене те, ĕççыннисене те çăмăллăх кӳчĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленноçпа транспорт умне пысăк тата ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Предприятисен график тăрăх ĕçлемелле, производствăллă плана кашни кун тултарса пымалла, бракă пĕтермелле, продукцин пахалăхне хăпартмалла, хăйне ларакан хакне йӳнетмелле. Крахмал заводне илсен, вăл кăçалхи пĕрремĕш кварталта, иртнĕ çултипе танлаштарсан, лайăх ĕçлерĕ, плана 103 процент тултарчĕ. «Пахарь» тата «III Интернационал» промартельсем те плана 114—139 процент тултарчĕç. Пĕтĕмпе илсен, районри предприятисемпе артельсем XVIII партконференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Сĕтел-пукансем тăвакан мастерской начар ĕçлет. Вăл пĕрремĕш кварталта плана мĕн пурĕ те 70 процент ытларах кăна тултарчĕ. Пăс вăйĕпе ĕçлекен арман, кӳршек-чӳлмексем тăвакан мастерской тата ăпăхах ĕçлерĕç, пĕри—кварталти плана 65 процент, тепри — 40 процент çеç тултарчĕç.

Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви тăвассине ӳстерес шутпа хăшпĕр предприятисем малтанхи кунсенче паха пуçарулăх кăтартрĕç. Сăмахран, крахмал завочĕ 6 тонна, е 10.500 тенкĕлĕх патка пылĕ, 4 тонна, е 7000 тенкĕлĕх брага туса кăларчĕ. Сĕтел-пукансем тăвакан мастерской 200 ытла витре, тимĕр кăмака, таз т. ыт. ăпаласене туса кăларчĕ. Ку мастерской ачасем валли вылямалли тоттăсем туса кăларма, катка-пичкесем тумалли цех организацилеме пулчĕ. Унтанпа 4 уйăх çитет, анчах çак паха ĕмĕт сӳнсе ларчĕ, халĕ ĕнтĕ витре, таз таврашсене тăвассине те пĕтерсе лартрĕç. Паха пуçарăва вĕçне çитереймерĕç.

Предприятисем хăйсем туса кăларакан таварсен ассортиментне яланах анлăлатса пымалла. Анчах ăна курма çук. Районри ĕççыннисем лавкасене пырсан щетка ыйтнине час-часах тĕл пулатăн. Паллах, ку щеткăсене тастан кӳрсе килме кирлĕ мар, ăна Елчĕкрех тума майсем пур. Щетка тăвакан сĕтел-пукансем тăвакан мастерскойра пуçарса ярас вырăнне, мастерской хăй те урайне пасартан илнĕ щеткăсемпе шăлать.

Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем, продовольстви ытлăн-çитлĕн туса кăларма районăн пысăк майсем пур. Анчах çав майсемпе туллин усă курни çук. Сĕт-çу завочĕ (унăн директорĕ Ласточкин юлташ) февраль уйăхĕнчех мороженнăй тата квас тума тытăнмалла пулнă. Апрель уйăхĕ вĕçленет, çапах та кунта мороженнăйпа квас туса кăларма тытăнман-ха. Районĕпе аш-какайлăх 63 сысна мăнтăрлатмалла, паянхи куна 6 сысна çеç. Сĕт-çу завочĕн 12 сысна усрамалла. Завод директорĕ Ласточкин юлташ пĕр сысна ами илнĕ те, çак ама 10 çăвăр тăвасса шанса ларнă. Сысна çăвăрланă, анчах 3 çăвăр кăна туса панă. Елчĕк сельповĕпе больницăра та хĕсĕр сыснасем çăвăрласа парасса кĕтсе ларнă, халĕ те вĕсем аш-какайлăх сысна самăртмалли пункт туман.

Районра тăм, чул темĕн чухлех. Яманчурелĕнче 1 метр хулăмĕш сланец сарăлса выртать, «Журавлевка», Ленин ячĕпе тăракан, «Осоавиахим» колхозсен хирĕсенче торф нумай. Анчах çак пуянлăхсем усăсăр выртаççĕ.

Иртнĕ çулсенче «Осоавиахим» колхозра, Ленин ячĕпе тăракан, «Н. Ишеряково» колхозсенче кирпĕч туса кăларчĕç, «Н. Волна», Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче известь çунтарса тăватчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 1940 çулта 20 пин штукăна яхăн кирпĕч туса кăларнă. Анчах юлашки вăхăтра ку ĕç те сӳнсе ларнă. Çавна пула ĕнтĕ районри ĕççыннисем кирпĕч илме 20—25 çухрăма Пăхăрçа (Тутар республики), Нĕркеçе (Комсомольски район) каяççĕ. Черепица туса кăларма та районра пысăк майсем пур.

Кирпĕч, известь илме ытти районсене каяссине пĕтермелле. Кавалти, Аслă Елчĕкре, Патрикелĕнче, Аслă Шăхалĕнче, Яманчурелĕнче т. ыт. чылай ялсенче кирпĕч, известь, черепица тăвассине пуçарни çеç кирлĕ. Ĕçĕн результатчĕсем лайăх пуласси çинчен иккĕленмелли те çук.

Районра çырмасем, кӳлĕсем нумай. Вĕсенчен çулленех 100 центнер ытла пулă тытма май пур. «Канаш» колхозăн 18 гектар лаптăкĕ таран йышăнакан кӳлли ним усăсăр сарăлса выртать. Кунта пулă ĕрчетес пулсан, вăл хăй кăна 50—60 центнер пулă пама пултарать. «Осоавиахим» колхозăн, крахмал завочĕн кӳллисем те усăсăр выртаççĕ. План тăрăх кăçал пĕвесемпе кӳлĕсене 22 пин пĕчĕк пулă ямалла.

Хурт-хăмăр ĕрчетесси çине те тивĕслипех çаврăнса пăхмалла. Районри 54 колхоз сахалтан та 6—7 пин вĕлле пыл хурчĕсем усрама пултараççĕ. Анчах ку ĕç—халь пирĕн районра чи лайăх юлнă участок. Райçĕрĕç пайĕнчи даннăйсем тăрăх, колхозсенче халь 1000 ытла вĕлле пыл хурчĕсем шутланаççĕ. Уйрăм колхозсем, сăмахран, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 100 вĕллерен 1940 çулта 35-шер килограмм пыл туса илнĕ. Чапаев, Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те ку ĕçе аван туса пыраççĕ. Çапла пулин те колхозсенче, пĕтĕмпе 30—32 колхозра, пыл хурчĕсем вуçех усрамаççĕ.

Район пуян. Çав пуянлăхпа пĕлсе тата пĕтĕмпех усă курни кирлĕ. Анчах пуçарулăх сукки, хăшпĕр чухне «ĕç тухăç-ши» тесе иккĕленсе тăни пĕтĕм ĕçе чăрмантарса тăрать. Ĕççыннисем куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви ытлăн-çитлĕн туса пыма ыйтаççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес пулать.

Ф. МАЙКОВ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Греции фронтран Грецин Эпирпа Македонири çарĕсем парăнни çинчен тĕплĕн калакан сведенисем килеççĕ Греци командованийĕн сводкинче çапла калалă: Битоль ятлă сăртсем çинчи тӳрем вырăнта Германи вăйĕсем хăвăрт малалла кайса пынипе Грецине Югослави çарĕсем хушшинчи çыхăну татăлнă пирки, çавăн пекех тата Албанире Греци войскисен тылĕ умне хăрушлăх тухса тăнине пула Греци войскисен оборона линийĕсем йăлтах арканса кайнă, çакна пула вĕсен анлăн та васкавлăн каялла чакмалла пулса тăнă. Германин мотомеханизированнăй чăсĕсем Битоль районĕнчен малалла хăвăрт кайса пынипе тата çакна май Албанири фронтри войскăсен сулахай флангне каялла чакмалли тĕп çулпа усă курма май пулманнипе Грецин çак фронтри чăсĕсен тусем çине хăпарса каймалла пулса тăнă. Тусем çинче каялла чакма тата войскăсене кирлĕ яналасене илсе тăма питех те йывăр пулнă. Грецин Эпирти тĕп вăйĕсем —хисеп енĕпе икĕ хут пысăкрах Итали войскисене хирĕç юлашки самантченех ăнăçлă çапăçнă войскăсем те ытти мĕнпур чăссемпе пĕрле каялла чакнă. Каялла чакас тĕлĕшпе операцисене, Итали войскисем вăйлăн хĕснĕ пулсан та, йĕркеллĕ туса ирттернĕ. Противникăн пысăк йышлă авиацийĕ каялла чакакан грексен чăсĕсем çине татти-сыпписĕр бомбăсем пыра-пыра пăрахнă, çакна пула вара Греци войскисемшĕн йывăр услови тухса тăнă. Çакăн хыççăн, апрелĕн 20-мĕшĕнче каçхине Греци чăсĕсен ирĕксĕрех парăнмалла пулнă.

Юлашки кун хушшинче Грецире активлă вăрçă ĕçĕсем пулман. Германи сводкинче калануе тăрăх, Англи арьергардĕсене хирĕç пынă çапăçусенче Германи войскисем Фермопилти позицисем çине пырса кĕнĕ. Грецири государство хăрушăрлăхĕн министерстви каларнă коммюникере çапла каланă: Германи самолечĕсем Пирей, Саламин, Аттика тата Мегара районĕсем çине темиçе хутчен бомбăсем пырса пăрахнă. Пăрахнă бомбăсем суднăсемпе портсен сооруженийĕсене чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Çавăн пекех Коринф районĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Германи самолечĕсен отрячĕ Фив районĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германи самолечĕсен тепĕр отрячĕ Милос утравĕ çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

Англипе Германи хушшинчи фронтра Германи авиацийĕн активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Плимут порчĕ çине фугаслă бомбăсемпе вут чĕртсе яракан бомбăсем нумай пырса пăрахнă. Германи самолечĕсем çавăн пекех Портсмут порчĕ çине те пырса тапăннă. Апрелĕн 22-мĕшĕнче тата иртнĕ апрелĕн 24-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Англири хăшпĕр аэродромсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи порчĕсем тавра минăсем лартса çӳренĕ.

Çав каçах, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи авиацийĕ Германин Брестра пытанса тăракан çар карапĕсем çине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Англи авиацийĕн министерстви каларнă коммюникере çапла каланă: Норвеги çыранĕ патĕнче Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕ Германин суту-илӳ тумалли пароходне тата миннăй тральщикне атакăланă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче Германи авиацийĕ Англи суднисемпе опорлă базисене хирĕç кĕрешнĕ. Итали командованийĕн сводкинче калануе тăрăх, Германи бомбардировщикĕсем Англи парохочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Германи самолечĕсем, тенĕ Германи сводкинче, Мальта утравĕ çине татах тепĕр хут пырса тапăннă.

Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем, халичченхи пекех, Тобрук патĕнче тата Соллум районĕнче сарăлса пыраççĕ. Германипе Италин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Тобрук çине темиçе хут пырса тапăннă. Бомбăсем тĕлех пырса лекнипе танксене стройран кăларнă, автомобильсен колонписене салатса янă, çавăн пекех порта тата англичансен суднисене пысăк сиенсем кӳнĕ. Пĕр пароход путарнă. Итали сводкинче каланă тăрăх, Англи чăсĕсем авиаци пулăшнипе Тобрука хупăрласа тăракан войскăсен кăшăлне татса тухма хăтланнă, анчах вĕсен ирĕкçĕрех каялла чакма тивнĕ. Англи сводкинче каланă тăрăх, Тобрук районĕнче, çавăн пекех Соллум секторĕнче патрульсен чылаях пысăк активлăхĕ палăрать. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ, Египетăн хĕвеланăç пайĕнче Англи çарĕпе пĕрле çуреконскер, çапла пĕлтерет: Суэц каналĕ умне Ливи енчен тухса тăнă Германи хăрушлăхне сахалтан та пĕр вăхăтлăха сирсе янă. Германипе Итали чăсĕсем, тет корреспондент, оборона çине куснă, вĕсене Соллумпа Тобрук патĕнчен каялла хăваласа янă, Англи авиацийĕ, тинĕс-çар флочĕ тата мотсмеханизированнăй чăсĕсем пĕрмаях атакăсем тунипе вĕсене салатса янă. Тобрук, тет малалла корреспондент, хăйне хăй нумай вăхăт хушши хӳтлесе тăма пултарать пулас. Тобрук гарнизонĕ оборона линийĕн тулашне тухса атакăсем тăвать. Корреспондент çапла пĕлтерет: çак фронтра нимĕçсен самолечĕсем Итали самолечĕсенчен нумайрах, Англирен опытлă летчиксем пырса çитиччен кăна Германипе Итали авиацийĕ Англи авиацийĕнчен çӳлерех тăнă. Германин Ливири вăйĕсем, тет корреспондент, халиччен шутланинчен чылай пĕчĕкрех тесе шухăшлама пулать. Çакăнпа пĕрлех тата хальхи вăхăтра вĕсем Тобрукпа Соллум фрончĕсем хушшинче икĕ пая уйăрăлнă.

Юнайтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Ливири фронтра Англи войскисем наступленипе тума пуçланă. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ те çак фронтра англичансем пуçарулăх кăтартма пуçлани çинчен пĕлтерет. Англи авиацийĕ Германипе Итали транспорчĕсем çине пĕрмаях бомбăсем пыра-пыра пăрахать. Барди çывăхĕнче англичансем пулеметсенчен персе Германин транспорт колоннине пысăк сиен кӳнĕ. Çав колонна шыв, газолин тата ытти припассем турттарса пынă пулнă. Çавăн пекех Германин Бенгази районĕнчи снабжени бази çине те бомбăсем пыра-пыра пăрахаççĕ. Вăйлă подкрепленисем иличчен тата Тобрука туртса иличчен, тет малалла корреспондент, нимĕçсем Суэц каналне хирĕç татăклă наступлени пуçласшăн мар, тесе шутлаççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, чи пысăк çапăçусем Десси секторĕнче (Аддис-Абеба патĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăç енче) сарăлса пыраççĕ. Итали сводкинче каланă тăрăх, Десси районĕнче Англи войскисем çав-çавах атакăсем тунă, анчах та вĕсене Итали чăсĕсем малалла кайма паман. Англи командованийĕн сводкинче çапла кăтартса панă: Десси патне çурçĕрпе кăнтăр енчен пырса кĕмелли вырăнсене хӳтлесе тăракан Итали войскисене хирĕç Англи чăсĕсем татах та вăйлăрах кĕрешме пуçланă. Рейтер агентствин ятларласа кайнă корреспонденчĕ, Англин Абиссинири войскисемпе пĕрле çурекенскер, çапла пĕлтерет: Керен патĕнче пулса иртнĕ çапăçу хыççăн Итали войскисем Десси патĕнче пирвайхи хут çине тăрса çапăçма пуçланă. Итальянсем, тет корреспондент, паха позицисем йышăннă тата çăртлă районсенче укрепленисем туса хӳтлесе ларнă, вĕсем Англин имперски войскисен наступленине пĕр вăхăтлăха чарса тăраççĕ пулмалла. Рудольф кӳлли патĕнчен çурçĕр енче, тенĕ Англи сводкинче, Англи войскисем Маджине туртса илнĕ.

Апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС).

Японири тайнăй советăн чрезвычайлă ларăвĕ

ТОКИО, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). Домей цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян 17 сехет те 30 минутăра Японири тайнăй советăн чрезвычайлă пленарнăй ларăвĕ уçăлнă, лару уçăлнă çĕрте император пулнă. Ун умĕн тайнăй совет уйăрнă комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ (çав комитет составне совет членĕсем пурте кĕнĕ). Комитет Японипе Совет Союзĕ хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакта — ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мацуока апрелĕн 12-мĕшĕнче Мускавра алă пусса çирĕплетнĕ пакта ырласси çинчен решени йышăннă хыççăн, тайнăй советăн пленарнăй ларăвĕ хупăннă.

Болгари войскисем Греципе Югослави территорийĕсем çине пырса кĕнĕ

СОФИЯ, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Болгари войскисем Греципе Югослави чиккисем урлă каçнă. Фракипе Македони пырса кĕнĕ.

Ачасен пултарулăхĕн олимпиадисем

Иртнĕ çулта ачасен пултарулăх олимпиадисем пулса иртрĕç. Çак олимпиадăсенче ачасем хăйсен таланчĕсене калама çук пысăккăн кăтартса пачĕç: пирĕн республикăн олимпиадăсене тата творчествăллă выставкăна пĕтĕмпе 32 пин ача ытла хутшăннă.

Ачасем хушшинчи художествăллă пултарулăха тата творчествăна малалла аталантарса пырас тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи июль уйăхĕнче ачасен творчествин республикăри иккĕмĕш олимпиадине ирттерме йышăннă. Совнарком йышăннă тăрăх, ку олимпиадăсем çак йĕркепе пулса иртмелле: апрель уйăхĕнче шкулсенчи смотрсем, июнь уйăхĕнче районсенчи смотрсем пулмалла.

Театр 58 колхозра пулчĕ

Сĕнтĕрвăрринчи пĕрремĕш колхоз театрĕ çак кунсенче колхозсенчен тарăнчĕ. Театр Шупашкар тата Октябрьски районсенчи колхозсенче постановкăсем лартса панă. Икĕ районри 58 колхозра пулнă.

Колхозниксем «Коварство и любовь» пьесăра артистсем рольсене аван вылянине палăртнă.

А. СМИРНОВА.

Çĕнĕ кĕнекесем

И. СТАЛИН — «Социал-демократи наци ыйтуне мĕнле ăнланать?». Чăвашгосиздат, 1941 ç., 27 стр., хакĕ 35 пус.

Сталин юлташăн ку статьи 1904 ç. «Пролетариатпа брдзола» («Пролетариат кĕрешĕвĕ») хаçатра пичетленсе тухнă. Ана çырнăранпа 36 çул ытларах иртнĕ пулин те, вăл хăйĕн пахалăхне паян кун та çухатман. Кĕнекен тĕп пĕлтерĕшĕ «пролетариат çĕнтерĕвĕшĕн **мĕнпур рабочисене, вĕсен национальноçне пăхмасăрах,** пĕрлештерни кирлĕ» тени пулать. Çакăнтах Сталин юлташ буржуаллă националистсен «наци ыйтăвĕсене» тишкерсе, вĕсем пролетариат кĕрешĕвĕнче сиенлĕ вырăн йышăнса тăнине кăтартса паратъ.

Кĕнекене ăнланмалла куçарнă, шултра шрифтпа пичетлесе кăларнă.

* * *

«Чăваш фольклорĕ». Чăвашгосиздат, 1941 ç., 215 стр., хакĕ 5 тенкĕ.

Сборнике Чăвашсен чĕлхе, литературa тата историн наукăпа тĕпчев институчĕ пичете хатĕрлесе панă.

Сборник тĕпрен икĕ пая пайланать: пĕри — Октябрьччěнхи фольклор (вăл кĕнекен пысăкрах пайне йышăнать), тепри — Октябрь хыççăнхи фольклор. Октябрь хыççăнхи фольклорта халăх ĕççыннисен çулпуçĕсем çинчен мĕнле сăмахлăх хывса пыни ăраснах палла выраăн йышăнса тăрать. Кĕнеке чăваш литературине вĕрентекенсемпе вĕренекенсемшĕн питех те пысăк пулăшу паракан пособи вырăнне шутланма пултарать.

* * *

Аркадий Эсхель. «Икĕ герой». Чăвашгосиздат. 47 стр., хакĕ перспетпа 1 т. 45 пус.

Аркадий Эсхелĕн ку кĕнекине Совет Союзăн Геройĕсем В. П. Чкалов тата В. П. Винокуров çинчен çырнă очеркĕсем кĕнĕ. Кĕнекере автор Совет Союзĕнчи паллă çынсен паттăр ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа панă.

Пугачев çинчен калакан материалсем

Краеведени музейĕнче

Чăвашсен краеведени музейĕн истори отделĕнче хресченсен XVIII ĕмĕрти вăрçи çинчен калакан материалсем пур, — çав вăрçа Емельян Иванович Пугачев ертсе пынă.

Ку материалсене музея пыракансем яланах интереслесе пăхаççĕ. Вĕсем, çак материалсем, самодержави чухне халăх массисен пурнăçĕ тӳсме çук йывăр пулнине кăтартса панипе пуçланаççĕ. Акă, пысăк картина: художник кунта налог тӳлеменшĕн хресчене асаплантарнине ӳкерсе кăтартнă. Хресченсене строй витĕр кăларса, патакпа хĕнесе т. ыт. майсемпе те асаплантарнине кăтартакан картинăсем çине пăхнă чухне çан-çурăм çӳçенсе тăратъ.

Айăпа кĕнĕ тесе шутлакан хресченсене час-часах Уралти крепостной заводсене янă. Унта вĕсем выçлăхпа суклăх тата нуша курса пурăннă. Уралти заводсенче чăвашсем те сахал мар пулнă. Академик Лепехин хăйĕн 1770 çулта çырнă записникне Уралти заводсенчи чăвашсем çинчен çапла калана: «Чăвашсене заводра ĕçлеме çирĕплетмен, анчах унта вĕсем ыттисемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Ку вăл хăйсем кунта ĕçлес тенипе тата вĕсем чухăннипе пулса пырать. Никамран та ырă сăмах илтеймен çак халăх, хĕсĕрлӳ тӳснипе е мĕнле те пулин урăх тип-шар курнипе чухăна юлса, пуянсенчен уçса кивçен илет. Заводчиксем кун пек чухне уçса шеллесе тăмаççĕ, чăвашсене кивçен параççĕ... Вĕсем кивçен илнине ĕçлесе татма пултарасси çинчен пĕлместĕп, — чăваш руда кăларса е вутă касса илнĕ уçа пĕтĕмпе пекех алса илнипех пĕтсе пырать: çулталăк хыççăн çулталăк иртет — вăл кивçене ытларах кĕрсе пырать».

Уралта хресченсен движенийĕ пуçланнă, вăл движенине Пугачев ертсе пынă. Вăл хăвăрт сарăлса, Атăл тăрăхне куçса пынă. Музейре Пугачев войскисен çулне кăтартакан карттă пур. Хусан патĕнче поражени тӳснĕ хыççăн, Пугачев Атăл тăрăх тăвалла сулахăй енне (йăлăм енне) пынă. 1774 çулта çуллахи вăхăтра Пугачев войскисем Нерядово ялĕ патĕнче (Сĕнтĕрвăрри районĕ) Атăл урлă каçнă та Çĕрпӳ хулине кайнă. Çĕрпӳ хулинчен Пугачев Етĕрне патне, унтан Улатăра çул тытнă.

Пугачев Улатăр хулине пырса кĕнине кăтартса пысăк картина ӳкернĕ. Хулари чухăнсем хăйсене ирĕке кăларакансене хĕпĕртесе кĕтсе илнĕ. Пур енчен те пухăннă халăха Пугачев уçса тата тăвар партарнă. Улатăртан унăн войскисем Саранск еннелле тухса кайнă.

Стена çинче — Емельян Иванович Пугачевăн пысăк портречĕ. Ăна сăнчăрласа клеткăна хупнă та Мускава илсе каяççĕ. Анчах Пугачев сăн-пичĕ çапах та унăн вăй-хăватне тата патăрлăхне кăтартать. 1775 çулти январĕн 10-мĕшĕнче Пугачева шатша палачĕсем касса вĕлернĕ. Пугачевецсене патша самодержавийĕ чи тискер майсемпе пусарнă: çăхса, касса тата шалча çине лартса вĕлернĕ. Англирен килнĕ çулçӳревçĕ Трахтенберг çырса хăварнă тăрăх, пĕр Арзамасрах пугачевецсене 11.000 çын вĕлернĕ.

Музейра хресченсен Пугачев ертсе пынă вăрçи вăхăтĕнчен юлнă япаласем те чылай.

Вл. ИСАЕВ.

Вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ

ÇЕМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хулари çутĕç пайĕ юлашки вăхăтра шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче паха ĕçсем туса ирттерет. Пумаях та пулмасть вăл комбинат тата «Большевик» завод клубĕсенче воспитани ыйтăвĕпе пухусем туса ирттерчĕ. Унта 2-мĕш тата 4-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем пулнă.

Çитес кунсенче хулари çутĕç пайĕ родительски комитет членĕсемпе канашлу ирттерме палăртнă.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 279 сантиметр хушăннă. Шыв горизончĕ — 716 сантиметр. Апрелĕн 25-мĕшĕнче ирхине сывлăшри температура пĕр градус ăшă пулнă. Атăл пăрĕ вакланса юхать.

Лекци

Паян, апрелĕн 26-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче философи çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Развитие философской мысли в России»** темăпа тӳлевлĕ лекци пулать (пĕрремĕш лекци). Лектор — **Сафрошкин** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Наркомфин Чувашской АССР об'являет,

что в связи с введением нового порядка регистрации штатов, фондов заработной платы и смет административно-хозяйственных расходов на 1941 год, Наркомфин созывает инструктивное совещание руководителей и бухгалтеров всех подлежащих регистрации учреждений, предприятий и организаций города Чебоксары.

Совещание созывается 28 апреля в 20 часов в республиканском Доме учителя (ул. Ленина, 3, 2-й этаж. Вход со двора).

Явка для бухгалтеров обязательна.

ВНИМАНИЮ ГРАЖДАН!

ВСЕ МАГАЗИНЫ Торга, Горло, СПО и ларьки, торгующие водкой и ликеро-водочными изделиями,

ПРИНИМАЮТ

в неограниченном количестве за наличный расчет

ПОСУДУ.

ГРАЖДАНЕ, сдавайте порожнюю посуду!

3—1

КАНАШСКАЯ ШКОЛА МЕХАНИЗАЦИИ СЕЛЬСКОГО ХОЗЯЙСТВА

Об'являет набор на курсы комбайнеров и трактористов.

На курсы принимаются граждане обоего пола, достигшие 18-летнего возраста и имеющие общеобразовательную подготовку в об'еме 5 классов.

ДЛЯ ПОСТУПЛЕНИЯ НА КУРСЫ ТРЕБУЮТСЯ:

1) справка с места последней работы,
2) свидетельство об образовании,
3) медицинское свидетельство,
4) паспорт и военный билет пред'являются лично.

Командировочное удостоверение от МТС не обязательно.

Все принятые обеспечиваются стипендией в размере: комбайнеры—120 руб., трактористы—80 руб.; бесплатным общежитием и постельными принадлежностями.

При школе функционирует столовая.

Начало занятий 3 мая.

2—2 ДИРЕКЦИЯ.

Суд

БАНДИТ

Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Тăрмăш ялĕнчи кулак ывăлĕ пулнă Виктор Александрович Александров Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçленĕ чухне 1938 çулти ноябрĕн 8-мĕшĕнче рабочисен общежитийĕнчен пальтосем вăрласа тухса тарнă пулнă. Анчах вăл тарса хăтăлайман, ăна çав кунхинех тытнă.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче Александров вăрра, судчен ниçта та каймании çинчен шантарса хут илнĕ хыççăн, паспортне илсе ирĕке кăларнă пулнă. Çакăн хыççăн Александров ниçта ĕçлемесĕр çапкаланса çӳренĕ.

1939 çулти февралĕн 25-мĕшĕнче Александров каллех Канашри вагонсем юсакан завода пырса çаклаппă. Çавăнта вăл Йăлмача ялĕнчи (Канаш р.) çамрăк ачапа, Мефодий Алексеевич Алексеевпа паллашса, ăна хăйсен ялне хăнана илсе кайма пулнă.

Мефодий Алексеев хăйĕн çĕнĕ тусĕн усал шухăшне пĕлмен, вăл унпа пыма килĕшнĕ. Çул çинче тискер шухăшлă Александров Алексеева пуçран пысăк вут пуленипе çапса амантнă, унтан ăна вĕлерсех пăрахнă. Алексеев кăсъинчен паспорт, ялсоветĕчен илнĕ справкăна тата 200 тенкĕ укçине илнĕ те, бандит вăрман ăшĕнче урăх çулпа утнă.

Вăхăт нумаях та иртмен, çав бандит вербовкăпа Новосибирск хулине çитнĕ. Вăл халь Александров Виктор мар, Алексеев Мефодий пулнă.

Вилнĕ Мефодий Алексеев çумĕнче 1805 цифрăллă пĕчĕк хут таткисĕр пуçне урăх нимĕн те пулман. Çав номерлĕ хут таткин тепĕр енче «Наркомздрав» тенĕ паллă пулнă. Милици управленинче ĕçлекенсем çак номер тăрăх вилнĕ çын кам иккенне пĕлнĕ...

Халĕ Виктор Александрович Александрова (вăлах Мефодий Алексеевич Алексеев) бандита Новосибирск хулинчен тытса килнĕ. Вăл унта та судпа айăпланма ĕлкĕрнĕ.

Александров (Алексеев) бандит ĕçне тĕрĕслесе пĕтернĕ, ĕçе суд аллине панă.

Шăнасене ĕрчеме памалла мар

Хĕллехи вăхăтра вар-хырăм чирĕсем (хырăм тифĕ, юнлă варвĕтти, ахаль варвĕтти т. ыт. те) сахал тĕл пулаççĕ пулсан, çуркунне вĕсем яланах нумайланаççĕ. Вăл чирсем çынна микробсем урлă ереççĕ. Кашни сикекен чирĕн хăйне майлă микробсем пур. Ерчессе вĕсем таса мар, вараланчăк, çутă сахал кĕрекен вырăнсенче ĕрчеççĕ. Çав вырăнсенчен вĕсем апат-çимĕçпе е ĕçекен шывпа çын ăшне кĕрсе кайсан вара сывă çын чирлесе ӳкет. Анчах мĕнле майпа лекеççĕ-ха микробсем апат-çимĕç çине? Вĕсене пуринчен ытла шăнасем илсе кĕреççĕ. Шăпасем микроблă тĕрлĕ вараланчăк сене çиеççĕ, çав çăтса янă микробсенчен нумайĕшĕ шăна хырăмĕнче чĕрĕ юлаççĕ, хăшпĕр чух ĕрчеççĕ те. Кайран испраженипе е хăсăкпа пĕрле вĕсем шăна хырăмĕнчен тухса ӳкеççĕ. Шăна хăй ларнă çĕре йĕр туса хăварнине пурте пĕлеççĕ. Çав палла вăл шăна испражненийĕ е хăсăкĕ, унта шутласа кăларми микроб нумай. Тата, шăна урисем тĕклине те пурте пĕлеççĕ. Шăна пĕр-пĕр вараланчăк çине ларать те, кайран пӳрте вĕссе кĕрсе, апат-çимĕçе вараласа хурать. Ун хыççăн вара çын çинет те, вар-хырăм тифĕпе е юнлă варвĕттипе чирлет. Çакă вăл килте е кӳршĕре кам та пулин сикекен вархырăм чирĕпе чирлĕ çын пулсан питĕ хăруша. Пĕр килте çакăн пек пулнă: ашшĕ-амăшĕсем пĕртен-пĕр ачине, чирлесрен хăраса, ниçта та илсе тухман. Çалах та ачи юнлă варвĕттипе чирленĕ хыççăн 6 кунтанах вилнĕ. Мĕнле майпа? Юнашар килте тепĕр ача унченех варвĕттипе пулнă иккен. Унăн вараланчăк кĕписене вĕсем килхушшине тухса çакнă пулнă. Шăнасем пырса, юнлă варвĕтти микробĕсене кӳршĕне илсе çитернĕ.

Кун пек примерсем пурнăçра тем чулах. Вĕсем шăнасемпе кĕрешме кирлине питĕ усçăн кăтартсе параççĕ.

Шăнасем питĕ хăвăрт ĕрчеççĕ. «Пӳлĕмри шăна» пĕр вăхăтрах 110—115 çăмарта хурать. Шăнасем хăйсен çăмартисене тислĕк ăшне, çӳп-çап ăшĕнче тата çавăн пек ытти тасамар вырăнсене хураççĕ. Вăтам шутпа пĕр кун иртсен çăмартасенчен пĕчĕк шурă хуртсем (личинкăсем) çуралса тухаççĕ. Личинкăсем хăйсене хунă çĕрти тасамарлăх шĕвекĕпех тăранса пурăнаççĕ. Личинкăсенчен куколкăсем пулаççĕ, вĕсенчен тепрер эрнерен шăна пулса тухать. Ăшă çителĕклĕ пулмасан куколкăсем тислĕк ăшĕнчех хĕл каçма пултараççĕ. Çăмартаран шăна пулса тухас вăхăт 20—25 куна тăсăлать, ăшă кунсенче ку вăхăт 10—12 кун таринчен чакать. Çакăнтан ăшă кунсенче шăнасем мĕншĕн нумайăн палла ĕнтĕ. Çуралса тухнă шăна хăй те 10 кунтан çăмарта хума тытăнать. Хăй пурнăçĕнче шăна 600 çăмарта таран хурать.

Шăнасемпе кĕрешес ĕçе хулара та, ялта та ĕçхалăх массин хăйĕн туса пымалла. Ку ĕç çуркунне ирех пуçламалла. Пурне те паллă, юр ирĕлнĕ май тислĕксем тата ытти тасамарлăхсем те ирĕлсе çĕр çине тăрса юлаççĕ, Çавсене çуллана та çаплипех хăварсан, вĕсем çинче шăнасем ĕрчеме пуçлаççĕ. Пирĕн шутпа, çĕршыв типнĕ май кашни ялтах, колхозрах, кашни килĕрех тасамарлăхсене тĕплĕн тасатса тухмалла. Унтан вара тасалăха малашне те сăнаса тăмалла. Пухăннă тислĕке çийĕнчех уйхире кăларса тăкмалла, вăхăтра кăларма май килмесен, тислĕке купа çине питĕ пушă, çемçе сийсем туса хумалла, вара унта тĕрлĕ микробсем ĕрчĕнипе температура 70 градуса çитиччен ӳссе каять. Çакăн пек температурăна тӳсеймесĕр шăна личинкисем вилсе пĕтеççĕ.

Çӳп-çапсене тата тасамар шывсене тăкма уйăрăм, ятарласа тунă вырăнсем кирлĕ. Вĕсем уçă тăмалла мар, çиелтен витмелле тумалла. Çапла вара унта шăнасем кĕрсе çăмарта хураймаççĕ. Пухăннă çӳп-çапа 5—6 кунтан килхушшинчен, ялтан кăларса тăкмалла, çуртарса ямалла тусан тата авантарах.

Уйăрăнах уборнăйсене вăхăтра тасатасси çине çавăрăнса пăхма кирлĕ. Уборнăйсене хлорнăй известь шĕвекĕпе сапса тăмалла. Ана чухăмăн тума та юрать. Пĕр витре шыв çине 1—2 килограмм хлорнăй известь ирĕлтерсен чухах пулать. Шĕвек тăракан уборнăйсене краççин сапсан та аван. Краççин шĕвекĕ çиеле тухса шăна личинкисене вĕлерет, краççин шĕвекĕ çине шăна çĕнĕрен çăмарта хумасть.

Пӳрт-çурта таса тытни, урайсене çуни, апат-çимĕçе тирпейлĕ пуçтарса, яланах витсе хуни — çаксем пурте шăнасенчен сыхласа, çемьене вар-хырăм чирĕсенчен хăтарма пулăшаççĕ Вĕсене тума ним ывăррипе те çук, анчах усси унăн пĕр çыншăн е уйăрăм çемьешĕн кăна мар. Пӳртре, кухняра пĕр вараланчăк та, пĕр ытлашши япала та ан пултăр. Манас пулмасть, тасамарлăх шăнасене питĕ илĕртет. Çавăнпа та шăнасем уçă чӳречерен вĕçсе кĕрсрен чӳречене ăшă кунсенче марлĕпе е урăх япалапа карса хурас пулать.

Çак майсене пурнăçа кĕртсен, шăнасем пӳртре ĕрчесе каяссинчен хăрамалли çук. Çапах та, вĕсем пурте вĕçсе кĕме пултараççĕ. Анчах вĕсемпе, сахал шăнасемпе кĕрешме, вĕсене кĕнĕçемĕн пĕтерсе пыма çăмăл. Кунта муховолкăсемпе тата шăна çыпăçакан хутсемпе усă курма пулать. Шăна çыпăçакан хута килтех тума пулать. 200 грамм канифоле, вут çинче вăрахăн ирĕлтерсе 100 грамм касторка (е йывăç çăвĕ, машина çăвĕ) хушса пăтратмалла. Лайăх хутшăнса çитсен 2 кашăк пыл е паток хушмалла. Çакăн пек вĕрирех шĕвеке пĕр татăк хулăмрах, чĕркемелли хут çине пĕр пек туса сармалла та, ун çине çавăн пек хутах сарса хумалла. Усă курас умĕн пĕрпĕринпе çыпăçса тăракан хут татăкĕсене ерипен уйăрса илсе тивĕçлĕ вырăна сарса хумалла. Урăх майсенчен формалин шĕвекне асăнма тивĕç. Пĕр чашăк шыв çине пĕр чей кашăкĕ формалин илсе яраççĕ те, ун çине пăртак сахăр е сĕт сапаççĕ, вара тарелкăпа лартса параççĕ. Ялта тата мухомор текен хĕрлĕ кăмпапа та усă курма пулать. Кăмпа пуçне аллалла туса 2—3 минута вĕри çĕрте (тимĕр, чул тата ыт.) тытаççĕ, кăмпаран сĕткен туха пуçласан сахăр сапаççĕ те, ачасем тĕкĕнмелле мар çĕре, çӳлерех лартаççĕ. Вилнĕ шăнасене чăхсене çитермелле мар, вĕсене çийĕнчех çунтарса ямалла. Çавнашкалах, шăнасене вĕлерекен хутсене е шĕвексене те тула кăларса пăрахасран сыхланмалла, çунтарса ямалла.

Пĕр-ик сăмах кайăксем çинчен. Чĕкеççем тата ыт. кайăксем шăнасене питĕ нумай пĕтереççĕ. Вĕсене кил-çурт сывăхнерех илĕртмелле, йăвисене çĕмĕрме ирĕк памалла мар.

К. С.

Заключительный баланс

Канашской кондитерской фабрики на 1 января 1941 г. (в тысячах рублей)

АКТИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
1. Средства вне оборота		
Основные средства	183,0	206,5
Капиталовложения	—	81,6
Отвлеченные средства	204,1	413,4
Итого средства вне оборота	387,1	701,5
2. Средства в обороте		
Сырье, топл. и материалы	74,6	131,0
Товары	4,1	4,1
Товары отгруженные	2,3	39,4
Расчеты (дебиторы)	16,8	11,9
Денежные средства	11,2	125,0
Итого средства в обороте	109,0	311,4
БАЛАНС	496,1	1012,9

ПАССИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Фонды и резервы	277,8	355,2
Расчеты (кредиторы)	43,3	52,8
Финансирование капиталовложений	—	69,0
Прибыль	175,0	535,9
БАЛАНС	496,1	1012,9

Счет прибылей и убытков (в тысячах рублей)

Расходы и убытки			Доходы и прибыли		
Расходы по операции с тарой	9,0	—	Доходы от реализации	197,6	531,5
От стихийных бедствий	2,3	—	Доходы разные	4,9	4,8
Расходы и убытки разные	11,2	2,4	Неиспользованные резервы	—	2,0
ИТОГО	22,5	2,4			
Чистая прибыль	175,0	535,9			
БАЛАНС	197,5	538,3	БАЛАНС	197,5	538,3

Директор Е. КОМАРОВА. Бухгалтер С. ГЕРАСИМОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85. издательство ертурин—0—23.

НТ 2666. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 227. ф. б. 58 1/64 п. л.